Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 ДЕКАБӖР 15 КĔҪНЕРНИКУН 286 (5099) №

Чӑваш Коммунӗ

21-мӗш ҫул тухать. ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗн хаҫачӗ. Пӗр №-рӗ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 6. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 6—67, ред. заместителӗн—3—97, редакци секретарӗн—4—40, парти пурнӑҫ пайӗн—7—67, ялхуҫалӑх пайӗн — 4—97, советсен пайӗн—0—88, промышленнӑҫ пайӗн—0—88, ялкорсен пайӗн—2—30, дежурнӑйӗн — 6—23.

Парти пропагандипе районри хаҫатсен задачисем

„ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсӗ" тухнӑ май парти пропагандине йӗркелесси ҫинчен" ПСК(б)П Тӗпкомӗ йышӑннӑ историлӗ постановлени большевикла пропагандӑна организацилессине ҫӗнӗ ҫулӗ пусӑма ҫӗклет, пирӗн партин тата пӗтӗм ӗҫсыннисен идейӑлӑ пурнӑҫӗнче ҫӗнӗ тапхӑр уҫать. ПСК(б)П Тӗпкомӗ хӑйӗн постановленийӗпе марксисӑм-ленинисӑм пропагандине организацилес ӗҫри кустарщинӑна, организацисӗрлӗхе, тӗрлӗ пӑсусене татӑкланах пӗтерет.

Пропагандӑ ӗҫӗнчи тӗп ҫитмӗнлӗхсенчен пӗри—парторганизацисем кружоксем урлӑ сӑмах вӗҫҫӗн пропагандӑлас метӑда тӗп вырӑна хурса, большевикла пичет пысӑк вырӑнта тӑнине тивӗҫлипе хакламанни пулнӑ. Ҫав вӑхӑтрах марксисӑм-ленинисӑм пропаганди ӗҫӗнче пирӗн пичет тӗп вырӑнта, ӗҫе татса паракан вырӑнта тӑрать. Ҫакна ПСК(б)П Тӗпкомӗ хӑйӗн постановленийӗнче йар уҫҫӑн кӑтартса панӑ „Пичет пӗр-пӗр чӑилӑха пӗр трукахпурин патне те ҫитерме май парать, ҫавӑнпа вӑл сӑмах вӗҫҫӗн тунӑ пропагандӑран вӑйлӑрах" (Тӗпком постановленинчен).

Пирӗн партин генилӗ ҫулпуҫӗсем Ленин тата Сталин йулташсем большевикла пичетӗн организатӑрӗсем пулнӑ. Пичет пулӑшнипе вӗсем революцилӗ парти тунӑ, рабочи класа патша самаинне ишӗлтерсе антарма, пролетарилӗ революци тума чӗннӗ. Ленин тата Сталин марксисӑмӑн аслӑ пропагандисӗсем пулнӑ, вӗсем пропагандӑ ӗҫӗнче пичетпе анлӑн усӑ курнӑ. Вӑл, пичет, пирӗн парти аллинче йаланах чи ҫивӗч, чи вӑйлӑ хӗҫпӑшал пулнӑ.

Пирӗн большевикла пичет хамӑрӑн кадрсене, пӗтӗм ӗҫсыннисене идейӑ тӗлӗшӗнчен воспитани парас ӗҫре йаланах питӗ пысӑк вырӑнта тӑнӑ. Пичет урлӑ пирӗн парти рабочи класпа, пӗтӗм ӗҫсыннисемпе кашни сехетре хӑйне кирлӗ чӗлхепе калаҫать, вӗсене вӗрентет, социалисӑм строительствинче ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемшӗн кӗрешӗве чӗнет.

„ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсӗ" тухнӑ май парти Тӗп Комитечӗ, Сталин йулташ пирӗн пичет умне пит те пысӑк та ответлӑ задачӑ кӑларса тӑратрӗҫ. Унӑн марксисӑм-ленинисӑм пропаганди ӗҫӗнче коммунистсене, комсомолецсене, совет интеллигенцине большевисӑмпа хӗҫпӑшаллантарас ӗҫре тӗп вырӑнта тӑмала. Халӗ марксисӑм-ленинисӑм пропаганди ӗҫӗнче пичет пысӑк вырӑнта тӑнине хак памаинне хӑварт пӗтересси—пайан ҫивӗччӗн тӑракан задачӑ.

Парти Тӗп Комитечӗ хӑйӗн постановленийӗнче „марксисӑм-ленинисӑм пропагандиче пичет ролне ҫӗклеме хушать". Хаҫатра ӗҫлекен кашни йулташӑн парти Тӗпкомӗ пичет умне лартнӑ пысӑк задачӑна ӑнланса, ӑна пурнӑҫа кӗртессишӗн ҫине тӑрса кӗрешмеле. Пирӗн пичетӗн пысӑк та ответлӑ ӗҫ тумала. Большевикла хаҫатӑн марксисӑм-ленинисӑмӑн кӗрӳлӗ пропагандисӗ пулмала. Ҫак задачӑна хаҫатсем парти организацийӗсем пирӗн пичете большевикла йӗртсе пырсан, редакци аппаратне ӗҫleme пултаракан работник ҫине ҫирӗплетсен ҫеҫ пурнӑҫа кӗртме пулать.

Марксисӑм-ленинисӑм пропаганди районри хаҫатсемшӗн те—питӗ ответлӑ политикӑлӑ ӗҫ. Халӗ ӗнтӗ хӑшӗр районри хаҫатсем ПСК(б)П историйӗ ыйтӑвӗсем, марксисӑм-ленинисӑм ыйтӑвӗсем тӑрӑх теорилӗ статйӑсем пичетлеме тытӑнчӗҫ. Анчах та пирӗн республикӑри районри [illegible] вӗсем: марксисӑм-ленинисӑм ыйтӑвӗсем тӑрӑх теорилӗ статйӑсем, консультацисем пичетлесси центрти тата республикӑри хаҫатсене ҫеҫ тивет, тесе шутлаҫҫӗ пулмала. Ҫавӑнпа та, Ҫӗрпӳ районӗнчи „СТАЛИНЕЦ", Улатӑр районӗнчи „ЛЕНИНСКИЙ ПУТЬ", Вӑрнар районӗнчи „СОЦИАЛИСАМ ҪУЛӖПЕ" хаҫатсем „ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсӗ" тухма пуҫланӑранпа вара теорилӗ пӗр статйа та пичетлесе кӑларман. Ҫак хаҫатсем марксисӑм-ленинисӑм пропагандисӗсем пулса

тӑман, вӗсем темӗн ҫинчен те ҫыраҫҫӗ, анчах парти историне вӗренме пулӑшакан теорилӗ статйасем ҫук.

Совет интеллигенцине политикӑлла воспитани парас ӗҫ мӗнле тӑни ҫинчен нимӗн ҫырмани те факт пулса тӑрать. Йепӗрне районӗнчи „Колхозник йулташӗ" хаҫатӑн ӗҫйалкорсен ретӗнче совет интеллигенци представителӗсем ҫук, интеллигенци большевисӑма вӗренни ҫинчен хаҫат нимӗн те ҫырмасть. Кунашкал хаҫатсем пирӗн татах та пур.

Ҫавӑн пекех пирӗн хаҫатсем час-часах практикӑ тӗлӗшӗнчен тепӗр чухне политикӑлӑ пысӑк йӑнӑшсемпе тухнине те тӳсме ҫук. Ҫапла, Шупашкар районӗнчи хаҫатӑн пӗр номӗрӗнче 45 йӑнӑш пулнине редакци те, парти райкомӗ те килӗшӳлӗ тесе шутланӑ пулас. Пирӗн хаҫатсем культурӑлӑ, политикӑ тӗлӗшӗнчен тӗрӗс ҫырнӑ материалсемпе ҫеҫ тухмала.

Паллах, районри хаҫатсене теорилӗ статйасене хӑйсен вӑйӗпе кӑтӗрлесе пичетлеме йӑвӑртарах. Анчах та, кашни районри хаҫатӑн марксисӑм-ленинисӑма пропагандӑлама май пур. Ытти облӑҫсенчи районри хаҫатсем „Правда" хаҫатри тата „Пресс-бюро" йарса паракан материалсене пичетлесе усӑ кураҫҫӗ. Ҫав тери кирлӗ материалсене урӑх хаҫатсенчен, сӑмахран, „Правдӑран" тата журналсенчен илсе пичетлени сийенлӗ мар. усӑлӑ ӗҫ пулать.

Районри хаҫат редакцийӗсем хушшинче ҫакӑн пек шухӑш пур: „пирӗн хаҫатсен формачӗ пӗчӗк, теорилӗ пысӑк статйасене пичетлеме вырӑн ҫук". Ку тӗрӗс мар. Хаҫатри вырӑнпа тӗрӗс усӑ курсан, районри органсен тӗрлӗ постановленисемпе планӗсене пичетлесе хаҫата бюллетень тума пӑрахсан, кашни хаҫатрах теорилӗ статйасем валли вырӑн пулать, вӑл пулмала та. Хаҫат марксисӑм-ленинисӑм пропагандисӗ пулмала тени вӑл—хаҫатра марксисӑм-ленинисӑм ыйтӑвӗсем, ПСК(б)П историйӗн ыйтӑвӗсем тӑрӑх теорилӗ статйасем тӑтӑшах пичетлесе тухмаллине пӗлтерет. Халӗ ҫак задачӑна пурнӑҫа кӗртес йенӗпе районри хаҫатсем нумайӗшӗ ӗҫе тытӑнман.

Марксисӑм-ленинисӑм пропагандисӗ пулласси—вӑл марксисӑм-ленинисӑм тата парти историне лайӑх пӗлекен йулташсене: пропагандистсене, партработниксене пичет ӗҫне активлӑн хутшӑнтармаллине пӗлтерет. Халӗ унашкал йулташсем пирӗн кашни районрах пур. Ҫак ӗҫре редакцисене парти райкомӗсен пысӑк пулӑшу памала.

Халӗ парти пропагандине Тӗп Комитет постановленийӗ тӑрӑх урӑхла тӗ ҫӗнетмеле. Пропагандистсен кадрне суйласа илмеле. ПСК(б)П историне харпӑрхӑй тӗллӗн вӗренес ӗҫе йӗркелемеле, парти историне вӗренекенсене пулӑшма лекцисем, консультацисем туса ирттермеле. Районри хаҫатсен пропагандистсен кадрӗсене суйласа илес, парткабинетсен ӗҫне лайӑхлатас ыйтусене, харпӑрхӑй тӗллӗн вӗренекенсен, лайӑх ӗҫлекен кружоксен паха опычӗсене ҫутатасси те пысӑк ӗҫ пулса тӑрать. Ҫавӑн пекех парти Тӗпкомӗн решенине пурнӑҫа кӗртнӗ чухне пулакан йӑнӑшсене пӗтерме пулӑшмала.

Пичет марксисӑм-ленинисӑм пропаганди Пӗтӗм Союзри трибунӗ. Пирӗн пичетӗн хисеплӗ задачи—хамӑрӑн кадрсене большевисӑмпа хӗҫпӑшаллантарасси, вӗсен революцилӗ сыхӑлӑхне ӳстересси пулать. Пичет работникӗсен парти Тӗпкомӗ [illegible] лӗн, ответлӑха туйса пурнӑҫласси пулать. ПСК(б)П историйӗн ыйтӑвӗсем тӑрӑх пичетлекен теорилӗ статйасенче нимӗнле йӑнӑш та тумала мар, революцилӗ сыхӑлӑхлӑ пулмала. Марксисӑм-ленинисӑм пропагандиче тӗп тата ӗҫе татса паракан хӗҫпӑшал пуласси вӑл питӗ ответлӑ ӗҫ. Партин ҫак пысӑк шанӑҫне пичет работникӗсен большевикла пурнӑҫа кӗртсе, кашни хаҫата марксисӑм-ленинисӑм пропаганди трибунӗ туса хумала.

Чехословаки правительствин декларацийӗ

Декабӗрӗн 13-мӗшӗнче Чехословакири депутатсен палатин ларӑвӗнче ҫӗнӗ правительствӑн декларацине вуласа панӑ.

Чехословакин тӗнчери лару-тӑруне асӑнса, премйер-министр Беран: „Правительствӑн пирвайхи задачӗ — чи пысӑк кӳршӗпе—Германипе пӗр-пӗрин хушшинчи ҫыхӑнусене йӗркелесси пулать", тесе каланӑ.

Малала Беран Польшӑпа тата Венгрипе лайӑх пурӑнмалла тӑвас ыйтӑва йӗркелесси ҫинчен, ҫавӑн пекех тата „Румынипе тата Йугославипе туслӑ ҫыхӑнусене малалла та тӗреклетсе пырасси" ҫинче чарӑнса тӑнӑ. Итали пирки Беран ҫапла каланӑ: „Епӗр Италипе хамӑр туслӑха малашне те тӗреклетсе пыма май пур пирки хӗпӗртетпӗр. Рим пирӗн пурнӑҫа лайӑх ӑнланать. Вӑл мӗн каланине епӗр йаланах тимлӗн итлесе тӑрӑпӑр". Ҫапла вара, Беран Чехословакин ҫӗнӗ „тусӗсене" йӗркерен асӑнса тухнӑ.

Шалти политикӑ йенӗпе декларацихуҫалӑхлӑ ыйтусем кӑларса тӑратать, ҫавӑн пекех ҫара демобилизацилесси ҫинчен, ялхуҫалӑх тухӑҫлӑхне хӑпартасси ҫинчен ыйту лартать. Чехословаки ялхуҫалӑх продукцисене йут ҫӗршывсене йарассине ӳстерме шутлать (ҫавӑн чек тума ӑна Германи хушать). Правительствӑ социаллӑ пулӑшу тата ӗҫсӗрлӗхе пӗтерес йенӗпе реформӑсем хатӗрлет (ирӗксӗрлесе ӗҫ лагерӗсене йарасси т. ыт.), качча тухнӑ работницӑсемпе служащисене ӗҫрен кӑларса вӗсем вырӑнне арҫынсене илме шутлать.

Деклараци ҫавӑн пекех тата коммунистсен партине салатса йама шутлать.

Ҫак пур задачӑсене те татса пама правительствӑ парламентран хӑйне вальди чрезвычайнӑй полномочисем пама ыйтать.

(ТАСС).

Клайпедри суйлавсем

Гитлӗрӑвӗцсен террорла ӗҫӗсем

Декабӗрӗн 11-мӗшӗнче Клайпед сеймикӗн (парламенчӗн) суйлавӗ пулса иртнӗ.

Клайпедри, Берлинран панӑ заданисем тӑрӑх ӗҫлекен гитлӗрӑвӗцсем хӑйсем умне Клайпеда Литваран уйӑрас тата облӑҫри влаҫа пӗтӗмпех хӑйсен аллине илес задача лартнӑ. Ҫакӑн пек тума Клайпедри гитлӗрӑвӗцсем сеймик суйлавӗпе усӑ курма шут тытнӑ. Суйлавсем вӑхӑтӗнче вӗсем Германи фашисӑмӗн ӗҫре тӗрӗсленнӗ пур меслечӗсемпе те пысӑккӑн усӑ курнӑ: террор, шантаж, хӑратасси, т. ыт.

Ҫакӑн пек хӑтланнипе те ӗҫ тухманнине кура, фашиссем Литва ҫыннисене тытса хӗнеме пуҫланӑ. Суйлавҫӑсене суйлав спискисем ҫинчен хурата-хурата пӑрахнӑ, урӑхла каласан, граждӑнсене нимӗнле сӑлтавсӑрах суйлав правинсӗр тӑратса хӑварнӑ.

Суйлав кунӗ—декабӗрӗн 11-мӗшӗнче—Клайпедра гитлӗрӑвӗцсен террорӗ уйрӑмӑнах вӑйланса кайнӑ. Суйлав участкисенче йӗркелӗхе сыхласа тӑма полицие мар, вырӑнти штурмовиксене хушнӑ. Вӗсем Литва ҫыннисем йенчен депутата тӑратакан кандидатсен представителӗсене суйлав мӗнле пынине астуса тӑма ирӗк паман. Штурмовиксем хӑратсах суйлавҫӑсене гитлӗрӑвӗцсен спискисемшӗн сасӑлаттарнӑ.

Акгли хаҫачӗсем: Мемӗл облаҫӗн кунҫулӗ ҫинчен тӑракан ыйту мӗнпе пӗтесси халех паллӑ, тесе ҫыраҫҫӗ. Гитлӗрӑвӗцсен Клайпедри руководителӗ Нейман Англи журналисӗсене: „Епӗ Клайпеда (Мемӗле) Литварах хӑварма майсем пуррине курмастӑп", „Мемӗлре пурӑнакан нимӗҫсен, австрийӗцсемпе Судет нимӗҫӗсем пекех, Литваран уйӑрӑлма права пур" тесе пӗлтернӗ.

Англи хаҫачӗ „Ньйус кроникл": „Чехословакине нимӗн хӗрхенмесӗрех сутса йанӑ Чемберлен йе Даладйе йенчен Литвана мӗнпе те пулсан пулӑшма пултарасси ҫинчен нимӗнле паллӑ та курӑнмасть", тесе ҫырать.

Франци хаҫачӗ „Епок", Мемӗл территоринче пурӑнакан 149 пин ҫынран нимӗҫсем пурӗ те 53 пин ҫын анчах пулнине кӑтартать.

(ТАСС).

Общинӑсен палатинче Чемберлен сӑмах тухса каланӑ

Декабӗрӗн 12-мӗшӗнче Англии премйер - министрӗ Чемберлен общинӑсен палатинче сӑмах тухса каланӑ. Чемберлен: Франци ҫине Итали тапӑнас-мӗн пулсан, Францине хӳтӗлес тӗлӗшпе Англин нимӗнле специаллӑ обйазательствӑсем те ҫук, тенӗ.

Ҫакӑн пек калаиипе,—тесе ҫырать „Ньйус кроникл" хаҫат,—Англи премйер-министрӗ Италине хавхалантарать кӑна, мӗншӗн тесен, Итали малашне ӗнтӗ Франци ҫине [illegible] хӑрамасӑрах, тапӑнма пулать тесе шутлать. Ҫав вӑхӑтрах, Францине халӑхи пек хӑварасси Англишӗн пурнӑҫлӑ ыйту пулать.

Франци хаҫачӗсем Чемберлен сӑмахне: „асӑрхамасӑртарах" каланӑ сӑмах, кун пек калани вӑл Итали правительствине йут ҫӗршывсене туртса илмелли плана пурнӑҫлас ӗҫре Англипе Франци пӗрлӗхӗнчен хӑраса тӑма кирлӗ мар тесе ӗнеме май парать, тесе [illegible].

{ТАСС}.

Италире Францине хирӗҫле кампани чарӑнмасть

Итали пичечӗ фашисла Италин захватчикле требованийӗсене ытларан ытларах анлӑлатать, „тӗпллӗн палӑртать". Итали хӑйне Суецки каналне тытса тӑрас ӗҫе йавӑҫтармала тутарассишӗн, Франци ҫӗрӗсене—Туниса, Корсикӑна, Совойӑна, Джибутине Итали аллине партарасшӑн ҫине тӑрать.

Правительствӑн „Релацноне интернационале" йатлӑ журналӗнче пичетленнӗ пӗр статйа йунаса хӑратнипе вӗҫленет: Франци уступкӑ памасть пулсан, „Итали вӑл проблемӑсене хӑйех татса парӗ", тесе ҫырать.

Италире йурийех урам йачӗсене улӑштараҫҫӗ, „Тунис", „Корсика", „Ницца" т. ыт. йатсем параҫҫӗ.

(ТАСС).

Йут ҫӗршывсенче

** Румыни влаҫӗсем Бухарестра „тимӗргвардейӗцсен" — фашиссен вӑрттӑн ӗҫленӗ пысӑк типографине тупнӑ. Тӑвата ҫын арӗсленӗ. Типографине йертсе пынӑ пуҫлӑхсенчен иккӗшӗ тарса пытаннӑ.

** Декабӗрӗн 12-мӗшӗнче Англине Германирен тарса тухнӑ йеврейсен ачисен иккӗмӗш ушкӑнӗ (500 ача) лырса ҫитнӗ.

** Словаки правительстви йулашки виҫӗ ерне хушшинче жандармсенче ӗҫлекен чехсене икӗ пин ҫын тата чукунҫул ҫинче ӗҫлекен чехсене 1500 ҫын ӗҫрен кӑларса Чехине ӑсатнӑ.

** „Улус" хаҫат (Анкара) Палестинӑра тӑватӑ уйӑх хушшинче 1.359 ҫынна вӗлерни ҫинчен ҫырса пӗлтернӗ. Вӗлернисен хушшинче: арабсем—1089, йеврейсем—219, англичансем—42 тата ытти халӑхсем—9 ҫын. Ҫав вӑхӑт хушшинчех аманнӑ арабсен шучӗ 500 ҫынран иртет.

(ТАСС).

Ботвинник Швецине пырса ҫитнӗ

ССРС гроссмейстерӗ Ботвинник Совет Союзне таврӑннӑ май ҫул ҫинче, Швеци столицинче—Стокгольмра чарӑнса тӑнӑ. Стокгольмри шахматиссен клубӗ чӗннипе, декабӗрӗн 14-мӗшӗнче Ботвинник пӗр харӑсах 30 ҫынпа шахмӑтла выляать. Декабӗрӗн 15-мӗшӗнче Ботвинник Финляндине тухса кайать.

(ТАСС).

Йугослави парламентне суйлани

Декабӗрӗн 11-мӗшӗнче Йугослави парламенчӗн (скупшчинӑн) суйлавӗ пулса иртнӗ.

Суйлав умӗн правительствӑ пур оппозицилӗ елементсене хирӗҫ те вӑйлӑ террор пуҫласа йанӑ. Ҫак террора пула правительствӑ суйлавсенче ытларахӗш сасӑ—70 процент таран илме пултарнӑ.

Анчах та Хорват тата Приморски округӗсенче ытларахӗш сасӑсем оппозици майлӑ пулнӑ. Йугослави столицинче, Белградра, террор темӗн пекех вӑйлӑ пулсан та, оппозици спискишӗн 11.561 ҫын сасӑланӑ.

(ТАСС).

Йугослави парламентне суйлании татӑклӑ результачӗсем

Йугослави парламентне (скупшчинӑна) суйланӑ чухне панӑ сасӑсене татӑклӑн шутласа пӑхнӑ чухне ҫакӑ курӑннӑ: правительствӑ спискишӗн, хаҫатсем ҫинче пӗлтернӗ пек, 70 процент мар, 58,9 процент ҫеҫ сасӑланӑ. Оппозици спискишӗн сасӑ панисен хисепӗ 41,1 процент.

(ТАСС).

Нойабӗр уйӑхӗнче Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗн Жуковский йачӗпе тӑракан Ленин орденлӗ Сывлӑш-Ҫар академинчен слушательсене вӗрентсе кӑларнӑ.

УКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: инженернӑй факультетран вӗренсе тухнисем Оборонӑ Халӑх Комиссарӗн Совет Сойуз Маршалӗн К. Е. Ворошилов йулташӑн приказне вуланӑ вӑхӑтра стройра тӑраҫҫӗ.

Ф. Кисловпа С. Лоскутов фото-ӳкерчӗкӗ (Бюро-клише ТАСС).

Нимӗҫ оккупанчӗсене Белоруҫҫирен хӑваласа кӑларса йанӑранпа 20 ҫул тулчӗ

Совет Белоруҫҫине парӑнтарса хӑйсен аллине илме хӑтланнӑ нимӗҫ захватчикӗсене татӑклӑнах ҫӗмӗрсе тӑкнӑранпа декабӗрӗн 14-мӗшӗнче 20 ҫул тулчӗ.

Октябӗрти Социалисӑмлӑ Аслӑ революци ҫӗнтерсен, Ленинпа Сталин йертсе пынипе Белоруҫҫири большевиксем Совет влаҫне тӗреклетес тӗлӗшпе ӗҫсем сарса йанӑ. 1917 ҫулти нойабӗр уйӑхӗн варринче Белоруҫҫири пур хуласенче те большевикла Советсем суйласа лартнӑ. Белоруҫҫи халӑхӗ тӗнче-лӗ вырӑс халӑхӗпе сойуз туса, ҫӗнӗ совет государстви тума пуҫланӑ.

Помешчиксемпе капиталиссем тата вӗсен лакейӗсем—буржуаллӑ националиссем, меньшевиксем, есерсем, бундовецсем, анархиссем, троцкиссемпе пӗрлешсе кайса. Совет влаҫне хирӗҫ, Белоруҫҫи халӑхне хирӗҫ кӗрешӳ пуҫласа йанӑ.

Халӑх тӑшманӗсем Белоруҫҫи халӑхне йут ҫӗршыв капиталӗн пусмӑрӗ айне кӗртсе ӳкерессшӗн пулнӑ. Вӗсем пур майсемпе те провокацисем туса нимӗҫсемпе вӑрҫӑс ӗҫе малала тӑсасшӑн пулнӑ, мӗншӗн тесен вӗсем, Германин тискер кайӑкӗсем хӗҫпӑшаллӑ аллипа Совет влаҫне пӗтерсе лартӗҫ, помешчиксемпе капиталиссем пуҫ пулса тӑрассине кайала тавӑрӗҫ, тесе ӗмӗтленнӗ. Иудӑ-Троцкий хӑйӗн хуҫисен—империалиссен ирӗкне пурнӑҫа кӗртсе, Брестри мирлӗ калаҫусем вӑхӑтӗнче ирсӗр измена, предательле ӗҫ туса, нимӗҫ империалисӗсене хапха уҫса панӑ. 1918 ҫулти февралӗн 18-мӗшӗнче Германи ҫарӗсем Белоруҫҫи ҫӗрӗсене турта-турта илме пуҫланӑ. Вӗсем Полоцка, Минска, Борисова, Оршана тата Белоруҫҫири ытти хуласемпе йалсене те кӗрсе йышӑннӑ.

Нимӗҫ захватчикӗсем тискер террор туса ҫӗнӗрен помещиксемпе капиталиссен влаҫӗ туса пынӑ, Белоруҫҫири рабочисемпе хресченсене кантӑр кунӗнчех ҫаратнӑ. Халӑх пурлӑхне вӑрланӑ, тустарнӑ, ӗҫ хресченӗсене ҫарагӑ пухнӑ апат-ҫимӗҫсене Германине турттара-турттара кайнӑ.

1918 ҫулта кӗркунне Хӗрлӗ Ҫар наступлени туса пырсан, нимӗҫ захватчикӗсен ирӗксӗрех сехӗленсе намӑслӑн тухса тармалла пулнӑ.

1918 ҫулти декабӗрӗн 10-мӗшӗнче Хӗрлӗ Ҫар Минска пырса кӗнӗ. Ӑна ӗҫсыннисем чӗререн саламласа кӗтсе илнӗ.

1918 ҫулхи декабӗрӗн 13—14-мӗшсем тӗлне нимӗҫ захватчикӗсене Белоруҫҫири хуласемпе йалсенчен татӑклӑнах, пӗтӗмпех хӑваласа кӑларса йанӑ.

Хӗрлӗ Ҫар пулӑшнипе, вырӑс халӑхӗ тавӑнлӑ пулӑшу панипе, Ленин—Сталин партийӗ йертсе пынипе Белоруҫҫи халӑхӗ хӑйӗн тӑван ҫӗршывне ҫыслӑн сыхласа хӑварчӗ.

Хальхи вӑхӑтра Белоруҫҫи Совет Республикӗ вунпӗр сойузлӑ республикӑсен шутӗнче хӑйӗн хисеплӗ вырӑнне йышӑнса тӑрать. Вӑл капиталисӑмлӑ хӗвелаҫ йенчикӗре хӑватлӑ форпост пулса тӑчӗ.

(ТАСС).

„Родина" самолет кирек мӗнле вӗҫеве тухма та хатӗр

Декабӗрӗн 12-мӗшӗнче Кербине самолет вӗҫсе пынӑ, вӑл унти вырӑнта пурӑнакан, „Родина" самолета ҫӗклесе кӑларнӑ ҫӗрте хутшӑнса ӗҫленӗ ҫынсен йулашки ушкӑнне илсе пынӑ. „Родина" анса ларнӑ вырӑнти пулнӑ лагере пӗтӗмӗшпех пӗтернӗ.

„Родина" самолет хаи Комсомольскри аеродромра ларать. Вӑл халех вӗҫсе тухма та, кирек мӗнле заданине пурнӑҫа кӗртме те хатӗр.

(ТАСС).

Джамбул Казахстана таврӑнать

[illegible] Казахстан халӑх йурӑҫи орденоносец Джамбул Джабайев Мускава хӑнара пулнӑ. 93 ҫула ҫитнӗ мухтавлӑ акын патне учонӑйсем, писательсем, студентсем, шкул ачисем пыра-пыра калаҫнӑ. Декабӗрӗн 13-мӗшӗнче, хӑй Алма-Атана тухса [illegible].

Декабӗрӗн 14-мӗшӗнче Джамбул Казахстана тухса кайнӑ.

Казански вокзалра писательсем халӑх йурӑҫне ӑшшӑн ӑсатса йанӑ.

(ТАСС).

Совет Сойузӗ тӑрӑх

* Декабӗрӗн 12-мӗшӗнче—ССРС Верховнӑй Советне суйлани пӗр ҫулталӑк тултарнӑ кун — Тбилиси хулинчи рабочисемпе служащисем противогазсем тӑхӑнса 5 километрлӑ поход туса ирттернӗ. Вал похода 40 пин ҫын ытла хутшӑннӑ.

* Одессӑри киностуди „Устим Кармелюк" йатлӑ историлӗ художествӑлӑ ҫӗнӗ фильм ӳкерсе пӗтернӗ. Украинӑри халӑх геройӗн Кармелюк ролне Украинӑри Шевченко йачӗпе тӑракан драмӑ театрӗн акторӗ Хвыля выляать.

* Декабӗрӗн 14-мӗшӗнче Мускавра XIX-мӗш ӗмӗрти паллӑ художник-реалист — О. А. Кипренский произведенийӗсен выставки [illegible] хупӑннӑ. Портретсен живописӗн чаплӑ маҫтӑрӗн произведенийӗсемпе 315 пин ҫын паллашнӑ.

* Декабӗрӗн 12-мӗшӗнче, ССРС Верховнӑй Совечӗн суйлавӗсем пулнӑранпа ҫулталӑк тулнӑ кун чыслаcа, Златоустри Сталин йачӗпе тӑракан металлурги савӑтӗнче ҫӗнӗ производствӑлӑ рекорд тунӑ, „750" стан ҫинче ӗҫленӗ сменӑ сехет хушшинче пахалӑхлӑ металл 192 тоннӑ йакатса кӑларнӑ.

* Севастопольри гранатометчиксен пӗтӗм хулари ӑмӑртӑвӗ пулса иртнӗ. Пӗрремӗш вырӑна ҫамрӑк краснофлотец Иванов тухнӑ, вӑл гранатӑна 62,4 метр инҫете мӗшнӗ.

* Тбилисире хӗрарӑмсен республикӑри шахмӑт турнирӗ пулса иртнӗ. Турнирта Грузири чи вӑйлӑ шахматисткӑсем 12 ҫын выляна. Пӗрремӗш вырӑна Тбилиси чемпионӗ Заргарйан йулташ йышӑннӑ, вӑл пӗрре те парӑнман, ҫынпа выляса 9,5 очко пухнӑ.

(ТАСС).

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (боļшевиксен) Партин

ИСТОРИЙĔ

КĔСКЕ КУРС.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиççийĕ редакциленĕ. *ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.*

Йулашкинчен калани.

Боļшевикла партн утса тухнă историлĕ çулăн тĕп итогĕсем мĕнле-ха?

ПСК(б)П историйĕ пире мĕне вĕрентет?

1) Парти историйĕ, чи малтан, çакна вĕрентет: пролетариатăн революцилĕ партийĕсĕр, оппортунисăмран ирĕклĕ, соглашательсемпе капитуļантсем тĕлĕшĕнчен ним килĕшми, буржуазипе унăн государстваă влаçĕ тĕлĕшĕнчен революцилĕ партисĕр пролетарилĕ революцин çĕнтерĕвĕ, пролетариат диктатурин çĕнтерĕвĕ пулма пултараймасть.

Парти историйĕ вĕрентет: пролетариата çавăн пек партисĕр хăварни—ăна революцилĕ руководствăсăр хăварассине пĕлтерет, ăна революцилĕ руководствăсăр хăварни вара—пролетарилĕ революци ĕçне аркатса йарассине пĕлтерет.

Парти историйĕ вĕрентет: йаланхи, Хĕвеланăç Йевропăри сăнарлă социал-демократла парти, граждански мир условисенче воспитани илнĕскер, оппортуниссем хыçĕнче хÿрере çапкаланса пыраканскер, „социаļнай реформăсем" çинчен ĕмĕтленекенскер тата социаļнай революцирен хăраканскер çакăн пек парти пулма пултараймасть.

Парти историйĕ вĕрентет: çĕнĕ сăнарлă парти çеç, марксисла-ленинла парти, социаļнай революци партийĕ, пролетариата буржуазипе хирĕç татăклă тытăçусене хатĕрлеттерсе çитерме тата пролетарилĕ революцин çĕнтерÿне организациилеме пултаракан парти çеç çакăн пек парти пулма пултарать.

ССР Сойузĕнче çакăн пек парти—боļшевикла парти пулса тăрать.

„Революци умĕнхи тапхăрта, тет Сталин йулташ, ытларах йе сахалтарах мирлĕ аталану тапхăрĕнче, II Интернационалăн партийĕсем рабочисен йухăмĕнче пуç пулса тăракан вăй пулса тăнă чухне, кĕрешÿвĕн парламентлă формисем тĕп формăсем шутланнă чухне,—çак условисенче парти кайарахра, революцилĕ уççăн тытăçусен вăхăтĕнче пулса тăнă пек пысăк тата ĕçе татса паракан пĕлтерĕшлĕ пулман, пулма та пултарайман. II Интернационала айăпланисенчен хÿтĕлесе, Каутский калать: II Интернационалăн партийĕсем мир инструменчĕ пулса тăраççĕ, вăрçă инструменчĕ мар, шăпах çаванпа вĕсем вăрçă вăхăтĕнче, пролетариатăн революцилĕ выступленийĕсен тапхăрĕнче мĕн те пулин пысăкрах ĕç тума пултарайман. Çакă вăл чăнах та тĕрĕс. Анчах çакă мĕне пĕлтерет-ха? Çакă вăл II Интернационалăн партийĕсем пролетариатăн революцилĕ кĕрешĕвĕ ваļļи йурахсăррине, вĕсем пролетариатăн рабочисене влаç патне илсе пыракан кĕрешÿлĕ партийĕсем мар, вĕсем парламент суйлавĕсене тата парламентла кĕрешĕве йурахлă тунă суйлав аппарачĕ пулса тăнине пĕлтерет. Çакăнтан килет те ĕнтĕ II Интернационал оппортунисĕсем пуçпулса тăнă тапхăрта пролетариатăн политикăлă тĕп организацийĕ парти мар, парламентри фракци пулса тăнă факт. Паллă, ĕçре çав тапхăрта парти парламентри фракцин хушмалчи тата уншăн ĕçлесе тăракан елемент пулса тăнă. Çакнашкал условисенче тата çакнашкал парти пуçра тăнă чухне пролетариата революцине хатĕрлессн çинчен самах та пулма пултарайманнине ĕнентерме тăрăшни кирлех те мар пулĕ.

Анчах çĕнĕ тапхăр пуçлансан ĕç тĕпренех улшăнчĕ. Çĕнĕ тапхăр вăл—классен уççăн тытăçăвĕсен тапхăрĕ, пролетариатăн революцилĕ выступленийĕсен тапхăрĕ, пролетарилĕ революци тапхăрĕ, империалисăма сирпĕтсе антарма, влаçа пролетариат аллине тытса илме вăйсене тÿррĕнех хатĕрленĕ тапхăр. Çак тапхăр пролетариат умне пĕтĕм партилĕ ĕçе çĕнĕ, революцилĕ майпа урăхлатса çĕнетесси çинчен, рабочисене влаçшăн революцилĕ кĕрешес шухăшлă воспитани парасси çинчен, резервсене хатĕрлесси тата революци патне илсе пырасси çинчен, кÿршĕри çĕршывсен пролетарийĕсемпе сойуз тăвасси çинчен, колонисемпе пăхăнса тăракан çĕршывсенчи ирĕке тухасшăн кĕрешекен йухăмпа çирĕп çыхăву тăвасси çинчен, т. ыт., т. ыт. çинчен çĕнĕ задачăсем лартать. Çак çĕнĕ задачăсене кивĕ социал-демократла партисен вăйĕсемпех, парламентарисăмăн мирлĕ условийĕсенче воспитани илнĕскерсен вăйĕсемпех тума пулать тесе шухăшлани вăл—хăвна ĕмĕт тухайми шанчăксăрлăха тăратса хăварассине, пурпĕрех поражени курмала пулассине пĕлтерет. Умма çак задачăсем тухса тăнă чухне кивĕ партисем пуç пулса тăни йулассн вăл—пĕтĕмпех хĕçпăшалсăр тăрса йулассине пĕлтернĕ. Ĕненterse тăма кирлĕ-ши вара пролетариат çакăн пек положенипе килĕшме пултарайманнине.

Çакăнтан тухса тăрать те ĕнтĕ çĕнĕ парти кирли, боевой парти, революцилĕ парти, пролетарисене влаçшăн кĕрешмешкĕн илсе пыма çителĕклĕ хăйула, революцилĕ обстановкăн кăткăс условийĕсене ăнланса илме çителĕклĕ опытлă, тата тĕллев патне çитмели çул çинче тĕлпулакан шыв айĕнчи пĕтĕм тата пур йышши чулсем патĕнчен пăрăнса иртсе кайма çителĕклĕ писĕ парти кирли.

Çакăн пек партисĕр империалисăма сирпĕтсе антарасси çинчен, пролетариат диктатурине кĕрешсе илесси çинчен шухăшламали те çук.

Çак çĕнĕ парти вăл—ленинисăм партийĕ пулать" (Сталин, Вопросы ленинизма, стр. 62—63).

2) Парти историйĕ, малала, вĕрентет: рабочи класăн партийĕ вăл рабочисен йухăмĕн малта пыракан теорине вĕренсе алла илмен пулсан, марксисла-ленинла теорине вĕренсе алла илмен пулсан, хăй классен руководителĕ роļне пурнăçлама пултараймасть, пролетарилĕ революцин организаторĕ тата руководителĕ роļне пурнăçлама пултараймасть.

Марксисла-ленинла теори вăйĕ çакăнта тăрать: вăл партине обстановкăра ориентировкă илме, йĕри-тавраri событисен шалти çыхăнăвне ăнланса илме, событисем мĕнле пулса пырассине малтанах курса тăма тата событисем хаļхи вăхăтра мĕнле тата ăçтала аталанса пынине çеç мар, тата вĕсем малашнехи вăхăтра мĕнле тата ăçтала аталанса пырассине те пĕлсе тăма май парать.

Марксисла-ленинла теорине вĕренсе алла илнĕ парти кăна малала шанчăклăн пыма тата рабочи класа малала илсе пыма пултарать.

Тата, пачах урăхла, марксисла-ленинла теорине вĕренсе алла илмен партин ирĕксĕрех хыпашласа аташса çÿремеле пулать, вăл хăйĕн ĕçĕсенче шанчăка çухатать, рабочи класа малала илсе пыма пултараймасть.

Марксисла-ленинла теорине вĕренсе алла илесси Маркс—Енгеļс—Ленин произведенийĕсенчи уйрăм вывăдсемпе положенисене ырран вĕренсе хурассине, кирлĕ вăхăтра вĕсенчен цитатăсем илсе калама вĕренессине тата вĕренсе хунă вывăдсемпе положенисем кирек мĕнле обстановкăра та, пурнăçăн пур вăхăтне те йурăхлă пулаççĕ тесе шанса лăпланса ларассине пĕлтернĕ пек туйăнма пултарать. Анчах марксисла-ленинла теори çине çакăн пек пăхни пачах тĕрĕс мар пулать. Марксисла-ленинла теорине догматсен пуххи, катехизис, символ веры вырăнне хурса, марксиссене хăйсене—буквойедсем, начетчиксем вырăнне хурса пăхмала мар. Марксисла-ленинла теори вăл обшĕствă аталанăвĕ çинчен вĕрентекен наукă, рабочисен йухăмĕ çинчен вĕрентекен наукă, пролетарилĕ революци çинчен вĕрентекен наукă, коммунисăм обшĕстви тăвасси çинчен вĕрентекен наукă. Вăл, наукă, пĕр вырăнта тăмасть тата тăма та пултараймасть,—вăл аталанать, лайăхланса пырать. Паллах, вăл хăйĕн аталанăвĕнче çĕнĕ опытпа, çĕнĕ пĕлÿсемпе пуйанланмасăр тăма пултараймасть, унăн уйрăм положенийĕсемпе вывăчĕсем вăхăт иртнĕçемĕн улшăнмасăр тăма пултараймаççĕ, историлĕ çĕнĕ условисене тивĕçлĕ çĕнĕ вывăдсемпе тата положенисемпе улшăнмасăр тăма пултараймаççĕ.

Марксисла-ленинла теорине вĕренсе алла илесси пĕрре те унăн пур формулисемпе вывăчĕсене вĕренсе хурассине тата çак формулăсемпе вывăдсен кашни саспаллирен йарса тытса пырассине пĕлтермест. Марксисла-ленинла теорине вĕренсе алла илес тесен, чи малтан, унăн саспаллийĕпе тупсăмĕ хушшинчи уйрăмлăха пĕлни кирлĕ.

Марксисла-ленинла теорине вĕренсе алла илесси вăл—çав теори мĕне вĕрентнине ăнланса илесси-не тата çак теорипе пролетариатăн клас кĕрешĕвĕн тĕрлĕ условийĕсенчи революцилĕ йухăмăн практикăлă ыйтăвĕсене татса панă çĕрте усă курма вĕренсе çитессине пĕлтерет.

Марксисла-ленинла теорине вĕренсе алла илесси вăл—çав теорине революцилĕ йухăмăн çĕнĕ опычĕпе пуйанлатма пĕлессине, ăна çĕнĕ положенисемпе тата вывăдсемпе пуйанлатма пĕлессине, ăна аталантарма тата малала илсе пыма пĕлессине пĕлтерет, кунта, теори тупсăмне хисепе илсе, унăн хăшпĕр кивве тухнă положенисемпе вывăчĕсене çĕнĕ историлĕ обстановкăна тивĕçлĕ çĕнĕ положенисемпе тата вывăдсемпе улăштарасси умĕнче те чăрăнса тăмала мар.

Марксисла-ленинла теори вăл догмă мар, ĕçпе кĕрешÿ руководстви.

Вырăссен иккĕмĕш революцийĕччен (1917 çулти февраļ) пур çĕршывсенчи марксиссем те капиталисăмран социалисăма куçнă тапхăрта парламентлă демократилĕ республикă обшĕствăн политикăлă организацин пуринчен те ытларах вырăнлă форми пулать, тесе шутланă. Чăнах та, Маркс 70-мĕш çулсенчех пролетариат диктатурин пуринчен те ытларах вырăнлă форми парламентлă республикă мар, Париж Коммунĕ сăнарлă политикăлă организаци пулать, тесе кăтартса панă. Анчах, шеллемеле пулсан та, Марксăн çак кăтартăвĕ Марксăн малашнехи ĕçĕсенче аталанса пыни пулман, ăна манăçа хăварнă. Кунсăр пуçне, Енгеļс 1891 çулта Ерфурт программин проектне критĕкленĕ чухне „демократилĕ республикă... пролетариат диктатуришĕн спецификăлă формă.. пулса тăрать",—тесе авторитетлă калани — марксиссем çапла демократилĕ республикăна пролетариат диктатуришĕн политикăлă формă пулать тесе шутланă пирки нимĕнле иккĕленÿ те хăвармаи. Енгеļсăн çак положенийĕ кайарахпа пур марксиссемшĕн те, вăл шутра Лениншăн та, йĕртсе пыракан пуçламĕш пулса тăнă. Анчах та 1905 çулти вырăс революцийĕ тата, уйрăмăнах, 1917 çулти февраļри революци обшĕствăн политикăлă организацин çĕнĕ формине—рабочисемпе хресченсен депутачĕсен Совечĕсене кăларса тăратрĕ. Марксисăм теорине тĕп вырăна хурса Российăри икĕ революцин опытне вĕреннĕ тăрăх, Ленин çакăн пек вывăд патне пырса тухнă: пролетариат диктатурин чи лайăх политикăлă форми парламентлă демократилĕ республикă мар, Советсен республикĕ пулса тăрать. Çакăн тăрăх, 1917 çулти апрелре, буржуалă революцирен социалисăмлă революцине куçнă тапхăрта, Ленин пролетари диктатурин чи лайăх политикăлă форми вырăнне хурса Советсен республикине организацилес лозунг кăларса тăратнă. Пур çĕршывсенчи оппортуниссем те, Ленина марксисăмран уйрăлса кайать, демократине çĕмĕрет тесе айăпласа, парламентла республикăран йарса тытма пуçланă. Анчах марксисăм теорине вĕренсе алла илнĕ чăн-чăн марксис, паллах, Ленин пулнă, оппортуниссем мар, мĕншĕн тесен Ленин марксисла теорине çĕнĕ опытпа пуйанлатса малала йарса пынă, оппортуниссем ăна кайала туртнă, унăн положенийĕсенчен пĕрине догмă туса хунă.

Мĕн пулнă пулĕччĕ-ши партипе, пирĕн революципе, марксисăмпа, Ленин марксисăм саспалли умĕнче хăраса тăнă пулсан тата марксисăмăн Енгеļс формулировкă панă кивĕ положенийĕсенчен пĕрне çĕнĕ историлĕ обстановкăна тивĕçлĕ çĕнĕ положенипе—Советсен республикĕ çинчен калакан положенипе улăштарман пулсан? Парти тĕттĕмре аташса çÿренĕ пулĕччĕ, Советсем дезорганизациленнĕ пулĕччĕç, пирĕн Совет влаçĕ пулман пулĕччĕ, марксисла теори пысăк çухату курнă пулĕччĕ. Пролетариат айа пулнă пулĕччĕ, пролетариат тăшманĕсем çиĕеле тухнă пулĕччĕç.

Империалисăмчченхи капиталисăма сăнаса вĕренсе, Енгеļспа Маркс çакăн пек вывăд патне пырса тухнă: социалисăмла революци уйрăм илнĕ пĕр çĕршывра çĕнтерме пултараймасть, вăл пур цивилизацилĕ çĕршывсенче те, йе вĕсенчен ытларахăшĕнче пĕр вăхăтра тапраннипе çеç çĕнтерме пултарать. Ку вăл XIX ĕмĕрĕн варринче пулнă. Çак вывăд - кайарахпа пур марксиссемшĕн те руководствă вырăнче тăракан положени пулса тăнă. Анчах та XX ĕмĕр пуçламĕш тĕлне империалисăмчченхи капиталисăм империалисăмлă капиталисăма ÿссе кĕнĕ, çÿлеле хăпаракан капиталисăмран вилсе пыракан капиталисăм пулса тăнă. Марксисла теорине тĕп вырăна хурса империалисăмлă капиталисăма сăнаса вĕреннĕ тăрăх, Ленин çакăн пек вывăд патне пырса тухнă: Енгеļспа Марксăн кивĕ формули çĕнĕ историлĕ обстановкăна тивĕçлĕ мар, социалисăмла революци уйрăм илнĕ пĕр çĕршывра та çĕнтерме пултарать. Пур çĕршывсенчи оппортуниссем те Ленина марксисăмран уйăрăлса кайать тесе айăпласа, Енгеļспа Марксăн кивĕ формулинчен йарса тытма пуçланă. Анчах марксисăм теорине вĕренсе алла илнĕ чăн-чăн марксис, паллах, Ленин пулнă, оппортуниссем мар, мĕншĕн тесен Ленин марксисла теорине çĕнĕ опытпа пуйанлатса малала йарса пынă, оппортуниссем ăна кайала туртнă, ăна мумийă туса пынă.

Мĕн пулнă пулĕччĕ-ши партипе, пирĕн революципе, марксисăмпа, Ленин марксисăм саспалли умĕнче хăраса тăнă пулсан, марксисăмăн кивĕ вывăчĕсенчен пĕрне айккине хăварса, ун вырăнне çĕнĕ историлĕ обстановкăна тивĕçлĕ çĕнĕ вывăдпа—уйрăм илнĕ пĕр çĕршывра та социалисăм çĕнтерме пултарасси çинчен калакан вывăдпа улăштарма унăн теорилĕ хăйулăхĕ çитмен пулсан? Парти тĕттĕмре аташса çÿренĕ пулĕччĕ, пролетарилĕ революци руководствăсăр тăрса йулнă пулĕччĕ, марксисла теори хăрса типме пуçланă пулĕччĕ. Пролетариат айа пулнă пулĕччĕ, пролетариат тăшманĕсем çиĕеле тухнă пулĕччĕç.

Оппортунисăмăн йаланах марксисла теорине йе унăн уйрăм положенийĕсемпе вывăчĕсене тÿррĕнех йышăнмасăр тăнине пĕлтермест. Оппортунисăм хăш чухне марксисăмăн кивве тухнă уйрăм положенийĕсенчен йарса тытма тата вĕсене догмăсем вырăнне туса хума, çапла тунипе, марксисăм малала аталанассине чарса лартма, çапла вара, çавăн пекех тата пролетариатăн революцилĕ йухăмĕн аталанăвне чарса лартма хăтланнисенче палăрать.

Пĕр ÿстермесĕрех çапла калама пулать: Енгеļс вилнĕ хыççăн питĕ аслăран та аслă теоретик Ленин, Ленин хыççăн—Сталин тата Ленинăн ытти ученикĕсем—пĕртен пĕр марксиссем пулнă, вĕсем марксисла теорине малала йарса пынă тата ăна пролетариатăн класлă кĕрешĕвĕн çĕнĕ условийĕсенче çĕнĕ опытпа пуйанлатнă.

Шăпах та çавăнпа ĕнтĕ Ленин тата ленинĕцсем марксисла теорине малала йанăран, ленинисăм марксисăма малала аталантарса пыни пулать, вăл пролетариатăн класлă кĕрешĕвĕн çĕнĕ условийĕсенчи марксисăм, империалисăм тата пролетарилĕ революцисен епохинчи марксисăм, çĕрĕн ултă пайĕнчен пĕр пайĕнче социалисăм çĕнтерĕ епохăри марксисăм пулса тăрать.

Боļшевиксен партийĕ, унăн малта тăракан кадрĕсем марксисăм теорине вĕренсе алла илмен пулсан, вĕсем çак теори çине ĕçпе кĕрешÿ руководстви çине пăхнă пек пăхма вĕренсе çитмен пулсан, вĕсем марксисла теорине пролетариатăн класлă кĕрешĕвĕн çĕнĕ опычĕпе пуйанлатса малала йарса пыма вĕренсе çитмен пулсан, 1917 çулти Октаберте çĕнтерме пултарайман пулĕччĕ.

Америкăри нимĕç марксисĕсене,—хăйсем çине Америкăри рабочисен йухăмне йертсе пырас ĕçе илнĕскерсене критиклесе, Енгеļс çырнă:

„Нимĕçсем хăйсен теорийĕнчен Америкăри массăсене хускатса йамали рычаг туса хума пĕлмен. Вĕсем чылай чухне çак теорине хăйсем те ăнланмаççĕ, ун çине доктринерла тата догматла пăхаççĕ, ăна наизусть калама вĕренмеле те вăл вара пурнăçăн пур вăхăтне те çителĕклĕ тесе шутлаççĕ. Вĕсемшĕн вăл—догмă, ĕçпе кĕрешÿ руководстви мар" (К. Маркс и Ф. Энгельс, т. XXVII, стр. 606).

Революцилĕ йухăм малала кайса социалисăмлă революци патне куçма ыйту лартнă вăхăтра, 1917 çулти апрелре пролетариатпа хресченсен революцилĕ демократилĕ диктатурин кивĕ формулĕнчен йарса тытнă Каменĕва тата ытти ватă боļшевиксене критиклесе, Ленин çырнă:

„Епĕр вĕрентни догмă мар, ĕçпе кĕрешÿ ваļļи руководствă, çапла каланă йаланах Маркспа Енгеļс; лайăх чухне те пĕтĕмĕшлĕ задачăсем палăртса хума çеç пултаракан, историлĕ процесăн кашни хăйне уйрăм тапхăрĕн конкретлă економикăлă тата политикăлă обстановкине пула пурĕ пĕрех улшăнма кирлĕ „формулăсене" вĕренсĕ хуниичен тата ăнланмасăр калама вĕреннинчен тĕрĕссипе тăрăхланă вĕсем... Хăв çакă ним тавлашмала мар чăнлăха ăнланни кирлĕ: марксисăн чĕрĕ пурнăçа, чăн пурнăçăн тĕрĕс фактисене шута илмеле, ĕнер кунхи теоринчен йарса тытса пымала мар..." (Ленин, т. XX, стр. 100—101).

3) Парти историйĕ, малала, вĕрентет: рабочи клас ретĕнче ĕçлекен, рабочи класăн кайа йулнă сийĕсене буржуази ытамне тĕксе пыракан, çапла вара, рабочи класăн пĕрлĕхне çĕмĕрекен вакбуржуалă партисене çĕмĕрсе тăкмасăр пролетарилĕ революци çĕнтерĕвĕ пулма пултараймасть.

Пирĕн партин историйĕ вăл—вакбуржуалă партисене: есерсене, меļшевиксене, анархиссене, националиссене хирĕç кĕрешнин тата вĕсене çĕмĕрсе тăкнин историйĕ пулать. Çакăн пек партисене парăнтармасăр, вĕсене рабочи класăн речĕсенчен хăваласа кăлармасăр рабочи клас пĕрлĕхне тума май пулман пулĕччĕ, рабочи клас пĕрлĕхĕсĕр вара пролетарилĕ революцин çĕнтерÿне пурнăçлама май пулман пулĕччĕ.

Çакă, малтан—капиталисăма сыхласа хăварассишĕн, унтан, Октаберь революцийĕ хыççăн, капиталисăма кайала таварассишĕн тăнă партисене çĕмĕрсе тăкмасăр пролетариат диктатурине сыхласа хăварма, йут çĕршывсен вăрçăлă интервенцине çĕнтерме, социалисăм тума май пулман пулĕччĕ.

Пĕтĕм вакбуржуалă партисем, халăха улталас шутпа хăйсене „революцилĕ" тата „социалисăмлă" партисем тесе йат панăскерсем—есерсем, меļшевиксем, анархиссем, националиссем—Октаберьти социалисăмлă революци умĕнех контрреволюцилĕ партисем пулса тăнине, кайран вара вĕсем йутçĕршывсенчи буржуалă разведкăсен агенчĕсем, шпионсен, сăтăрçăсен, диверсантсен, сыивĕлеренсен, тăван çĕршывăн изменникĕсен банди пулса кайнине ăнсăртран пулнă тесе шутлама йурамасть.

„Пролетариат пĕрлĕхне, тенĕ Ленин, социаļнай революци епохинче марксисăмăн чи революцилĕ партийĕ кăна, ытти пур партисене те хирĕç хăйарран кĕрешнипе кăна тума пулать" (Ленин, т. XXVI. стр. 50).

4) Парти историйĕ, малала, вĕрентет: хăйĕн речĕсенчи оппортуниссене хирĕç нимĕн килĕшми кĕрешмесĕр, хăйĕн хушшинчи капитуļантсене çĕмĕрсе тăкмасăр рабочи клас партийĕ хăйĕн речĕсен пĕрлĕхне тата дисциплинăна сыхласа хăварма пултараймасть, хăйĕн, пролетарилĕ революцин организаторĕпе руководителĕн, роļне пурнăçа кĕртме пултараймасть, хăйĕн, çĕнĕ, социалисăмла обшĕствă строителĕн роļне, пурнăçа кĕртме пултараймасть.

Пирĕн партин шалти пурнăçĕнчи аталану историйĕ вăл—парти ăшĕнчи оппортунисла ушкăнсене—„економиссене", меļшевиксене, троцкиссене, бухаринĕцсене, национал-уклониссене хирĕç кĕрешнин тата вĕсене çĕмĕрсе тăкнин историйĕ пулать.

Парти историйĕ вĕрентет: çак пур капитуļантла ушкăнсем те, чăннипе илсен, меļшевисăмăн пирĕн партн ăшĕнчи агенчĕсем, унăн кайашĕсем, меļшевисăм малала тăсалса пыни пулнă. Вĕсем, меļшевисăм пекех, рабочи класпа парти ăшне буржуалă влийанине кĕртсе пыракансен роļне туса пынă. Çавăнпа та партире çак ушкăнсене пĕтерессишĕн кĕрешни—меļшевисăма пĕтерессишĕн кĕрешес ĕçе малала туса пыни пулнă.

„Економиссене" тата меļшевиксене çапса хуçмасăр епĕр парти тума тата рабочи класа пролетарилĕ революци патне илсе пыма пултарайман пулăттăмăр.

Троцкиссемпе бухаринĕцсене çапса хуçмасăр епĕр социалисăм тума кирлĕ условисене хатĕрлесе çитерме пултарайман пулăттăмăр.

Пур тĕслĕ тата пур йышши национал-уклониссене çапса хуçмасăр епĕр халăха интернационалисăма майлă воспитани пама пултарайман пулăттăмăр, ССРС халăхĕсен аслă туслăх йалавне алăра тытса йулма пултарайман пулăттăмăр, Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузне тума пултарайман пулăттăмăр.

Боļшевиксем партири оппортунисла елементсене хирĕç кĕрешес ĕçе ытлашши нумай вăхăт хунă пек, вĕсем оппортуниссен пĕлтерĕшне ытлашши хакланă пек курăнма пултарать. Анчах ку пачах тĕрĕс мар. Сывлăхлă организăмра йухан-сурана чăтма çук пекех, хамăр хушăра та оппортунисăма чăтма çук. Парти вăл—рабочи класăн йертсе пыракан отрйачĕ, унăн малти крепăçĕ, унăн боевой штабĕ пулать. Рабочи класăн йертсе пыракан штабĕнче маловерсем, оппортуниссем, капитуļантсем, предательсем ларнине чăтма çук. Хăвăн штабăнта, хăвăн крепăçăнта капитуļантсемпе предательсем пулнă чухне буржуазипе хирĕç вилĕмлĕн кĕрешес тени вăл—фронтран та, тыран та перекен вырăна лекнĕ çынсем пекех пулнине пĕлтерет. Çакнашкал кĕрешÿ поражени курнипе çеç пĕтсе ларма пултарассине ăнланса илме йăвăр мар. Крепăçсене пуринчен ансатрах шалйенчен çĕнтерсе илеççĕ. Çĕнтерÿ тумала тăвас тесен, чи малтан, рабочи класăн партине, унăн йертсе пыракан штабне, унăн малти крепăçне—капитуļантсенчен, дезертирсенчен, штрейкбрехĕрсенчен, предательсенчен тасатас пулать.

Троцкиссем, бухаринĕцсем, национал-уклониссем, Ленина хирĕç кĕрешсе, партине хирĕç кĕрешсе, меļшевиксемпе есерсен партийĕсем хăйсен кĕрешÿне мĕнпе пĕтернĕ, çавăнпах пĕтернине—фашисла разведкăсен агенчĕсем, шпионсем, сăтăрçăсем, сынвĕлеренсем, диверсантсем, тăван çĕршыв изменникĕсем пулса тăнине, ăнсăртран пулнă тесе шутлама йурамасть.

„Хамăр ретсенче реформиссем, меļшевиксем пулнă чухне, тет Ленин, пролетарилĕ революцире çĕнтерме çук, вăл революцине сыхласа хăварма çук. Çак принципиаļнă тĕрĕсси курăнсах тăрать. Çакна Российăри опыт та, Венгрири опыт та уççăнах çирĕплетсе пачĕ... Российăра нумай хутчен йăвăр положенисем пулнă, ун чухне меļшевиксем, реформиссем, вакбуржуалă демократсем пирĕн парти ăшĕнчех йулнă пулсан, совет режимне пурпĕрех сирпĕтсе антарнă пулнă пулĕччĕ..." (Ленин, т. XXV, стр. 462—463).

„Пирĕн парти хăйĕн ăшĕнче пĕрлĕх тума тата хăйĕн речĕсенче нихçанхинчен çирĕп пĕтĕçÿ тума пултарчĕ пулсан, тет Сталин йулташ, çакă ĕнтĕ, пуринчен малтан, вăл хăйне оппортунисăм ирсĕрĕсенчен вăхăтра тасатма пултарнинчен, ликвидатăрсемпе меļшевиксене партирен хăваласа кăларма пултарнинчен килнĕ. Пролетариат партийĕсен аталанас тата çирĕпленес çулĕ хăйсене оппортуниссемпе реформиссенчен, социал-империалиссемпе социал-шовиниссенчен, социал-патриотсемпе социал-пацифиссенчен тасатни урлă выртать. Парти хăйне оппортунисла елементсенчен тасатнипе тĕреклене пырать" (Сталин, Вопросы ленинизма, стр. 72).

5) Парти историйĕ, малала, вĕрентет: парти çитĕнÿсем хыççăн çеç кайса мăнкăмăлланма пуçлать пулсан, вăл хăйĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене асăрхаса пыма пăрахать пулсан, вăл хăйĕн йăнăшĕсене йышăнма хăрать пулсан, вĕсене вăхăтра уççăн та тÿрĕ кăмăлпа тÿрлетме хăрать пулсан, хăйĕн, рабочи клас руководителĕн роļне пурнăçа кĕртме пултараймасть.

Парти критикăпа самокритикăран хăрамасть пулсан, хăйĕн ĕçĕнчи йăнăшсемпе çитменлĕхсене шăлса лартмасть пулсан, вăл кадрсене парти ĕçĕнчи йăнăшсем тăрăх вĕрентет тата воспитани парать пулсан, вăл хăйĕн йăнăшĕсене вăхăтра тÿрлетме пĕлет пулсан, вăл вара никам çĕнтерейми парти пулать.

Парти хăйĕн йăнăшĕсене пытарать пулсан, ыраттарса тăракан ыйтусене шăлса лартать, хăйĕн çитменлĕхĕсене пурте лайăх тăрать тесе кăтартакан суйа парадпа витсе хурат, критикăпа самокритикăна чăтмасть, хăйне хăй пур йенчен те çителĕклĕ пек туйать, хăйне çеç йуратма тытăнать тата çитĕнÿсемпе лăпланса ларать пулсан, вăл пĕтет вара.

«Политикăлă парти хăйĕн йăнăшĕсем çине мĕнле пăхни вăл, тет Ленин, парти çериознăй пулнине, хăйĕн класĕ тĕлĕшпе тата ĕçсынни массисен тĕлĕшпе хăйĕн обйазăнноçĕсене вăл ĕçре тунине кăтартакан кирлĕрен те кирлĕ тата тĕрĕсрен те тĕрĕс критерисенчен пĕри пулать. Йăнăша уççăн йышăнасси, унăн сăлтавĕсене уçса палăртасси, çав йăнăша суратнă обстановкăна анализ тăвасси, йăнăша тÿрлетмели майсене тĕплĕн сÿтсе-йавасси—акă çакă ĕнтĕ çериознăй партин паллалăхĕ, акă çакă ĕнтĕ вăл хăйĕн обйазăнноçĕсене туни, акă çакă ĕнтĕ класа, унтан вара массăсене те воспитани пани тата

(Йулашки 8-мĕш страницăра)

„ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕн" йулашки. Кун умĕнхи XII-мĕш сыпăк „Чăваш Коммунĕн" 284-мĕш номерĕнче пичетленнĕ.

ЙУЛАШКИ.

вӗрентни" (Ленин, т. XXV, стр. 200).

Малала тата:

«Халиччен пӗтнӗ револђуцилӗ пур партисем те, мӑнкӑмӑлланнипе, хӑйсен вӑйӗ мӗнре тӑнине курма пӗлменнипе, тата хӑйсен вӑйсӑрлӑхӗсем ҫинчен калама хӑранипе пӗтнӗ. Епӗр пӗтместпӗр, мӗншӗн тесен хамӑрӑн вӑйсӑрлӑхсем ҫинчен калама хӑрамастпӑр, вӑйсӑрлӑха парӑнтарма та вӗренсе ҫитӗпӗр» (Ленин, т. XXVII, стр. 260—261).

6) Йулашкинчен, парти историйӗ вӗрентет: массӑсемпе анлӑн ҫыхӑну тытмасӑр, вӑл ҫыхӑнусене йаланах тӗреклетсе пымасӑр, массӑсен сассине итлеме тата вӗсене ыраттарса тӑракан нушисене пӗлмесӗр, массӑсене вӗрентме ҫеҫ мар, тата массӑсенчен вӗренме те хатӗр тӑмасӑр,—рабочи класӑн партийӗ хӑй хыҫҫӑн рабочи класпа пӗтӗм ӗҫҫыннисен мӗлйунӗсене илсе пыма пултаракан чӑн-чӑнах массӑлӑ парти пулма пултараймаст̆.

Парти, Ленин каланӑ тӑрӑх, вӑл—„ӗҫҫыннисен чи пысӑк массисемпе, чӑн малтан пролетарилӗ, ҫавӑн пекех тата ӗҫҫыннисен пролетарилӗ мар массисемпе ҫыхӑнма, ҫывхарах тӑма, паллӑ сынӑк таран, кирлӗ теттӗр пулсан, вӗсемпе пӗрлешсе кайма пӗлет пулсан" вӑл никам ҫӗнеймн парти пулат̆ (Ленин, т. XXV, стр. 174).

Парти, вӑл хӑйӗн партиле ансӑр хупӑљчи ӑшне хупӑнса ларат̆ пулсан, массӑсенчен уйӑрӑлса кайат̆ пулсан, вӑл бӳрократла тутӑхпа витӗнсе ларсан, вӑл пӗтсе ларат̆.

«Пур тӗлӗшпе те ҫакна йышӑнма йурат̆, тет Сталин йулташ, бољшевиксем халӑхӑн йышлӑ массисемпе ҫыхӑну тытса тӑнӑ чух вӗсене никам та ҫӗнтерейес ҫук. Тата, тепӗр майлӑ та, бољшевиксем массӑсенчен уйӑрӑлса кайса вӗсемпе ҫыхӑну ҫухатсанах, вӗсем бӳрократла тутӑхпа витӗнсенех, вара вӗсем пӗр вӑйсӑр тӑрса йулӗҫ те, пуш йапала пулса кайӗҫ.

Авалхи грексен мифологи системинче пӗр чаплӑ герой—Антей пулнӑ, мифологи каласа панӑ тӑрӑх, вӑл тинӗссен Посейдон йатлӑ туррипе Гейа йатлӑ ҫӗр пикетурӑ ывӑлӗ пулнӑ. Вӑл хӑйне ҫуратнӑ, тӑрантарса пӑхса ӳстернӗ амӑшне уйрӑмах хыта йуратнӑ. Ҫав Антей ҫӗнтерменни пӗр герой та пулман. Вӑл ҫӗнтерейми герой шутланнӑ. Мӗнре пулнӑ-ха унӑн вӑйӗ? Вӑл акӑ мӗнре пулнӑ: тӑшманпа кӗрешнӗ чухне ӑна йывӑр киле пуҫласан, вӑл кашниччех ҫӗр ҫумне, хӑйне ҫуратса ӳстернӗ амӑшӗ ҫумне, пырса сӗртӗннӗ те ҫӗнӗ вӑй илнӗ. Анчах ҫапах та унӑн хӑйӗн вӑйсӑр йенӗ пулнӑ—вӑл мӗнле те пулин майпа ҫӗртен уйӑралса хӑпӑнас хӑрушлӑх. Тӑшмансем унӑн ҫав вӑйсӑр йенне шутра тытса, ӑна сыхласа тӑнӑ. Акӑ вара тӑшман тупӑннӑ, вӑл унӑн ҫав вӑйсӑрлӑхӗпе усӑ курса ӑна ҫӗнтернӗ. Ҫакӑ вӑл Геркулес пулнӑ. Анчах йепле ҫӗнтернӗ-ха вӑл ӑна? Вӑл ӑна ҫӗртен хӑпӑтса илнӗ, сывлӑша ҫӗкленӗ, унтан ҫӗр ҫумне пырса сӗртӗнес майне туртса илнӗ те, ҫапла вара сывлӑшра пӑвса вӗлернӗ.

Бољшевиксем пире грексен мифологи геройне, Антейа, аса илтереҫҫӗ, тесе шутлатӑп епӗ. Вӗсем те, Антей пекех, хӑйсен амӑшӗпе, вӗсене ҫуратнӑ, тӑрантарса пӑхса ӳстернӗ массӑсемпе ҫыхӑну тытнипе вӑйлӑ. Вӗсем хӑйсен амӑшӗпе, халӑхпа ҫыхӑну тытнӑ чух, вӗсем никам ҫӗнтерейми пулса йулма пур шанчӑк та пур.

Ҫакӑнта ӗнтӗ бољшевикла руководствӑн ҫӗнтерейми хӑвачӗн ҫӑрауҫҫийӗ» (Сталин, „Партилӗ ӗҫӗн ҫитменлӗхӗсем ҫинчен").

Ҫакӑн пек ӗнтӗ бољшевиксен партийӗ утса тухнӑ историлӗ ҫулӑн тӗп урокӗсем.

В Ӗ Ҫ Ӗ.

Теори тӗлӗшӗнчен кайа йулнисене пӗтермеле

КАНАШ. (Хамӑр корр.). Ҫак кунсенче хулари учителсемпе медицина работникӗсен тата йалти учителсен пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пухура парти Тӗпкомӗ „ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсне" каларнӑ май парти пропагандине йӗркелесси ҫинчен" йышӑннӑ постановленине пурнӑҫа кӗртесси ҫинчен доклад итлесе сӳтсе-йаврӗҫ.

Доклад хыҫҫӑн прение 7 ҫын тухса каларӗҫ. Вӗсем „ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсне" пичетлесе кӑларни чылай вӑхӑт иртрӗ пулин те, ку таранччен парти историне тивӗҫлипе вӗренме тытӑнманнине палӑртрӗҫ.

— Малтанхи вӑхӑтра кружоксенче вӗренсе епӗр ҫитӗлӗклӗ пӗлӳ илеймен. Халӗ ӗнтӗ пире парти историне вӗренме ПСК(б)П Тӗпкомӗ пур условисем те туса панӑ. Учебниксем пурин те пекех пур, кашни харпӑрхӑй тӗллӗн вӗренме пултарат̆, ӗҫе тытӑнни кӑна кирлӗ,—тет Иванав йулташ.

— Пӗлӳ хӑй тӗллӗнех пырса кӗмест. Пирӗн хамӑр тӗллӗн ытларах ӗҫлемеле. Парти историне тарӑнӑн вӗренни чухне Маркс, Енгељс, Ленин, Сталин ҫырнӑ кӗнекесене вуласа хамӑрӑн теорилӗ пӗлӗве ӳстермеле. Ҫавӑн пекех ССР Сойузӗн историне те тӗплӗн пӗлмеле,—теҫҫӗ тухса калакан йулташсем.

Пуху парти историне вӗренекенсене пулӑшма лекцисем, консуљтацисем организацилеме йышӑнчӗ. Ку тӗлӗшпе уйрӑмӑнах парти кабинечӗн лайӑх ӗҫлемелине палӑртрӗ.

Доклад тӑрӑх резољуци йышӑнсан, Хасан кӳлли патӗнчи ҫапӑҫусенче пулнӑ красноармейецсем Григорйевна Кошкин йулташсем, Йапони самурайӗсемпе мӗнле ҫапӑҫни, вӗсене мӗнле ҫӗмӗрсе такни ҫинчен каласа пачӗҫ.

П. Архипӑв.

ПСК(б)П Обком пленумӗн решенисене ырлаҫҫӗ

КУСЛАВККА. (Хамӑр корр.). Декаберӗн 9-мӗшӗнче ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗн II-мӗш пленумӗ йышӑннӑ решенисене сӳтсе-йавас ыйтупа коммуниссен районри пухӑвӗ пулса иртрӗ. ПСК(б)П райком секретарӗ Желтухин йулташ пленум решенийӗсем ҫинчен доклад туса панӑ хыҫҫӑн 22 ҫын тухса каларӗҫ.

Тухса каланӑ йулташсем пурте ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗн II-мӗш пленумӗн решенинче Канаш районӗнчи ҫитменлӗхсем ҫинчен палӑртни Куславкка районне те тивнине кӑтартса пачӗҫ.

Куславкка районӗ государствӑ умӗнчи обйазатӗлствӑсене пурнӑҫа кӗртсе ҫитермен-ха. Государствӑна обйазатӗлствӑ тӑрӑх тырӑ парса татман, укҫа тенкӗ пухас плана тултарас тӗлӗшпе республикре 15-мӗш вырӑн йышӑнат̆. Колхозсем аван ҫапса пӗтермен.

Пренире уйрӑмах комбинат начар ӗҫлени ҫинчен чаранса тӑчӗҫ. Комбинатра чылай вӑхӑт хушши тӑшмансем сӑтӑрла ӗҫсем туса пурӑннӑ. Комбинат директорӗ Никитин йулташ ҫак сӑтӑрла ӗҫсен йулашкийӗсене пӗтерес вырӑнне ПСК(б)П Обком тата райком решенисене пурнӑҫа кӗртессинчен пӑрӑнса тӑнӑ. Ахаљтен мар комбинатра 10 уйӑх хушшинче 84 авари пулнӑ.

Пуху хупӑнас умӗн ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗн бӳро членӗ Чурилӑв йулташ тухса каларӗ.

Пуху ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗн II-мӗш пленумӗ йышӑннӑ решенисене ырласа, вӗсене пурнӑҫа кӗртсе пыма пулчӗ.

Мрањка.

Хватер ыйтӑвӗ пирки

Шупашкарти спирт савӑтӗнче стахановецсен хисепӗ ӳссех пырат̆. Пайанхи куна вӗсен ретӗнче 89 ҫын шутланат̆. Анчах ҫапла пулин те савӑт комитечӗ вӗсен ӗҫӗпе, пурнӑҫӗпе сахал интересленет. Ҫавна пула ӗнтӗ савӑтра хватер условийӗ ҫитӗлӗксӗр вырӑнта тӑрат̆. Ӑна ҫакӑнтан та аванах курма пулат̆. 2-мӗш номӗрлӗ общежитинче пурӗ 22 работница пурӑнаҫҫӗ. Кусенчен ҫурри ытла стахановкӑсем. Анчах кунта тӑвӑр, ҫӑвӑнма умывађник те ҫук. Работницӑсем ирхине тӑрсан йесӗрен таварӑнсан шыв ӗҫмели бак гранӗнчен ҫӑварсемпе сыпса илсе пит ҫӑваҫҫӗ. Радио ӗҫлемест. Ҫуллахи вӑхӑтра шыв анса шӑннипе мачча ҫумӗнчи тӑм йатӑнса аннӑ пулнӑ. Халӗ ҫавна йусанӑ та лӑплаштарнӑ. Кӑмакасене йусаттарман. 3-мӗш номӗрлӗ общежитинче те кӑмака йусавлӑ мар.

Кӑҫал савӑт дирекцийӗ Артемйӗвӑ стахановкӑна квалификацине хӑпартас тесе 3 уйахлӑх курса вӗренме йачӗ. Анчах Артемйӗва вӗренме кайсан ун ҫинчен дирекци те, савӑт комитечӗ те манса кайаҫҫӗ. Унӑн хватерне урӑх рабочийе вырнаҫтараҫҫӗ. Халӗ Артемйӗва курсран таварӑнчӗ, хватер ҫук. Ҫавӑнпа вӑл Оҫипӑвӑпа пӗрле пӗр кроват̆ ҫинче выртса-тӑрат̆. Дирекци кун пирки нимӗн те шарламаст̆.

Лизӑ Борисӑвӑ.
Спирт савӑтӗнчи стахановкӑ.

Клинскри (Мускав облаҫӗ) чукунҫӑратакан савӑтӑн механически цехӗнчи стахановкӑ комсомолка - токӑр В.И. Дудковӑ плана кашни кунах 2.0 330 процент тултарат̆.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: В. И. Дудковӑ токарнӑй станок ҫинче ӗҫлет.

В. Иванов фотоӳкерчӗкӗ (Прессклише).

Чукунҫул строитӗлствинче

Станцӑсен пуйӑссене йышӑнма хӑвӑрттӑн хатӗрленмеле

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунҫул ҫитес кунсенчех вӑхӑтлӑх експлоатацине кӗрет. Вара чукунҫул тӑрӑх тавар турттаракан пуйӑссем кӑна мар, пассажирски пуйӑссем те ҫӳреме тытӑнаҫҫӗ. Мӗнле хатӗрленеҫҫӗ-ха станцӑсем пуйӑссене йышӑнса илме?

Акӑ Шупашкар станцине илер. Вӑл пуйӑссене йӗркелӗ ҫӳретес тӗлӗшпе пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрат̆. Унта паровозсене ҫавӑрмали пункт пулмала. Вакунсене тӗрӗслекен бригадӑсем пулаҫҫӗ т. ыт. те. Ҫак ӗҫсене тӑвасси хаљхи вӑхӑтра питех те вӑрах пырат̆. Чылай ӗҫсене тума тытӑнман. Семафорсене тата стрелкӑсене туса пӗтерсе йӗркелеме кирлӗ материалсем, ӗҫ вӑйӗ ҫитӗлӗклӗ пур. Анчах ӗҫ малала каймаст̆. Мӗншӗн тесен станцӑ начаљникӗ Мухин йулташпа строитӗлствӑ маҫтӑрӗ Козлов йулташ вӑл ӗҫсене тӑвас тӗлӗшпе пӗр-пӗрин ҫине шанса тӑраҫҫӗ.

Кадрсем хатӗрлес йенӗпе те ӗҫ начар тӑрат̆ Станцӑра дежурнӑйсем пулса ӗҫлеме 4 ҫын кирлӗ. Халӗ пӗри кӑна пур. Стрелочниксем ҫитӗлӗклӗ, анчах вӗсене лайӑх ӗҫлеме условисем туса паман. Хватерсем ҫук.

Станцӑ ҫуртне тата пассажирсем ваљђи уйарнӑ пӳлӗме те йӗркене кӗртмен. Ҫуртсене ҫутатма фонарсем ҫук. Багажсем илмели пӳлӗме халӗ те туман. Суту-илӳ организацилес тӗлӗшпе никам та нимӗн те тумаҫҫӗ-ха. Чӑвашсойузпа Чебторгӑн вӑл йенӗпе халех тытӑкла ӗҫсем тумала.

Ҫӗрпӳ станцийӗ те пуйӑссене йышӑнма тивӗҫлипе хатӗрленсе ҫитнӗ теме ҫук. Чӑнах та кунта семафорсене тата шыв тӑратмали йапаласене туса пӗтернӗ. Анчах стрелкӑсем йусавлӑ мар. Пӗтӗмпе 7 стрелкӑ. Вӗсен пӗрин те питӗрмели уҫӑсем ҫук. Виҫҫӗшин фонарӗсем ҫук. Уҫӑсем илес пирки станцӑ начаљникӗ нумай вӑхӑт ӗнтӗ строитӗлствӑ руководителӗсемпе калаҫат̆. Анчах ӑна никам та пулӑшмаст̆. Сигналсем хатӗрлес тӗлӗшпе те ҫавнашкалах. Станцӑра сӗтел-пукансем тата ытти кирлӗ йапаласене хатӗрлес йенӗпе нимӗн те туман-ха. Кадрсем те ҫитмеҫҫӗ.

Паллах, станцӑсене тӗплӗн хатӗрлесе ҫитермесӗр пуйӑссене йышӑнса илме май ҫук. Ҫакна асра тытса строитӗлствӑ руководителӗсен, станцӑсен начаљникӗсен вӑхӑта вӑраха йамасӑр станцӑсене лайӑххӑн тата хӑвӑрттӑн хатӗрлесе ҫитермеле.

М. Т.

Ҫулталӑк планне тултарнӑ

Уплерти (Сӗнтӗрвӑрри р.) „Наука Ленина" промысла ертелӗ организациленни ҫулталӑк кӑна ҫитрӗ пулин те ӗҫре паха тӗслӗхсем кӑтартат̆. Ертел ҫулталӑк хушшинче 400 пин кирпӗч тӑвас вырӑнне 532 пин туса каларчӗ.

Производствӑра ҫӗнӗ ҫынсем—стахановецсем ӳссе ҫитӗнчӗҫ. Акӑ Ваҫилйӗв, Иванов, Данилӑв, Кудрйашов йулташсем хӑйсене панӑ ӗҫсене лайӑх пахалӑхпа пурнӑҫа кӗртсе, нормӑна 1[illegible]0 процент тултарса пыраҫҫӗ.

Тухӑҫлӑ ӗҫленӗ май членсен пурнӑҫпа йӑла условийӗсем те лайӑхланса пыраҫҫӗ. Кӑҫал 5 ҫын ҫӗнӗ пӳртсем лартнӑ т. ыт. те.

М. Гаврилӑв.

Агитацилӗ-массӑлӑ ӗҫе вӑйсӑрлатнӑ

Ҫӗмӗрле комбинатӗнчи рабочисем хушшинче йулашки вӑхӑтра агитацилӗ-массӑлӑ ӗҫ йапӑхни курӑнат̆. Цехсенче, сменӑсенче политикӑлла ыйтусемпе ҫеҫ мар, производствӑ ыйтӑвӗсем тӑрӑх та каласусем туса ирттермеҫҫӗ; стена хаҫачӗсем йӗркелӗн тухса тӑмаҫҫӗ.

Ҫаксем ӗнтӗ профсойузпа парти организацисем цехсенчи агитатӑрсемпе ҫыхӑнса ӗҫлеменнине, вӗсене пулӑшу паманнине лайӑхах кӑтартса пара҄ҫҫӗ. Парткомӑн агитацилӗ-массӑлӑ ӗҫе туса пырас тӗлӗшпе план та ҫук.

П. Архипӑв.

Хаҫат-журнал сарас ӗҫ ҫитӗлӗксӗр пырат̆

Пирӗн социалисӑмлӑ ҫӗршывра пичет калама ҫук пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрат̆. Пирӗн коммунисла парти пичет урлӑ рабочисемпе, колхозниксемпе, пӗтӗм ӗҫхалӑх массипе кашни сехетрех хӑйне кирлӗ чӗлхипе калаҫат̆. Пропаганда ӗҫӗнче пичет уйрӑмах пысӑк вырӑн йышӑнат̆. Ҫакӑн ҫинчен пирӗн коммуниссен партин Тӗп Комитечӗ тата аслӑ Сталин пӗр хут кӑна кӑтартса паман. ПСК(б)П Тӗп Комитечӗ парти пропаганди ҫинчен йышӑннӑ постановлени пичет умне пысӑк та ответлӑ задачӑ хучӗ.

Халӗ кашни колхозник хаҫат-журнал вулат̆, радио итлет т. ыт. те. Ҫак вӑл пирӗн социалисӑмлӑ тӑван ҫӗршывра Сталинла Конституци хӗвелӗ ӑшшипе пурӑнакан халӑхӑн куљтурлӑхӗ калама ҫук хӑвӑрттӑн ӳссе пынине пӗлтерет.

Пирӗн республикӑри районсенче 1939 ҫулшӑн хаҫат-журналсем сарас ӗҫе тивӗҫлипе туса пыраҫҫӗ. Пайанхи куна чылай районсем республикӑри „Сойузпичет" уйрӑмӗ панӑ плана ытлашшипех тултарнисем те пур. Тӗслӗхрен, Улатӑр районӗ декаберӗн 10-мӗш тӗлне плана 119 процент тултарнӑ, Канаш районӗ—104 процент, Йелчӗк районӗ—100 процент тултарнӑ.

Уйрӑм хаҫатсен тиражӗсене тӗрӗс вырнаҫтарма пӗлни те кирлӗ. Ҫак ӗнтӗ вӑл пӗтӗмпех ӗҫе йӗркелеме пӗлнинчен, „Сойузпичетӗн" районти организатӑрӗ хаҫат-журналсене сарма уйарнӑ ҫынсемпе, халӑхпа тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлеме пӗлнинчен килет. Ку тӗлӗшпе Патӑрйел районне (райорганизатӑр Сейфуллин йулташ) палӑртма пулат̆. Унта декаберӗн 10-мӗш тӗлне 1939 ҫул ваљђи „Чӑваш Коммунӗ" хаҫата 615 екземпљар, „Красная Чувашия" хаҫата—580 екз., „Ҫамрӑк бољшевик"—703 екз., „Пионер сасси"—1600 екз. сарнӑ.

Лайах ӗҫлекен районсемпе пӗрлех, йапӑх ӗҫлекенсем те пур. Куславкка районӗ республикӑра чӑн кайри вырӑнта тӑрат̆. Унта декаберӗн 10-мӗш тӗлне 1939 ҫулшӑн: „Чӑваш Коммунӗ" хаҫата—25 екз., „Красная Чувашия"—40 екз., „Ҫамрӑк бољшевик"—4 екз., „Пионер сассине"—3 екземпљар, районри хаҫата 15 екземпљар кӑна сарнӑ. Ҫакӑн пек ниме йурахсӑр ӗҫлени пӗтӗмпех районри „Сойузпичет" уйрӑмӗнче ӗҫлекенсем кахалланнинчен килет.

Йулашкинчен ҫакна калас пулат̆: республикӑри чылай колхозсем ССРС Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ кӑларакан „Агротехнические советы колхозам" йатлӑ бӳллетене „Колхозный бригадир" йатлӑ журнала ҫыранман. Ҫак асӑннӑ икӗ журнал кашни колхоз правленинче, кашни бригадир аллинчех пулмала. Ҫав журналсем вӑйлӑ тырпула йепле туса илесси ҫинчен хаклӑ кӑтартусем параҫҫӗ.

Хаҫат-журнал сарас тӗлӗшпе ӗҫ йапӑх пыракан районсенчи „Сойузпичет" заведуйушчийӗсем кабинетран тухмасӑр, йӳҫӗхсе, бӳрократланса лараҫҫӗ. Вӗсем почтаљонсемпе, активпа ӗҫлемеҫҫӗ. Ӗҫҫыннисене вӑхӑтра хаҫат-журнал ҫырӑнтарасшӑн тӑрӑшмаҫҫӗ, вӗсене ӗҫре пулӑшмаҫҫӗ.

Кашни ӗҫҫынни аллинче хаҫат-журнал пулмала. Ҫак задачӑна пурнӑҫа кӗртес ӗҫре совет, профсойуз, парти, комсомол организацисем активлӑн хутшӑнса ӗҫлени кирлӗ. Вӗсем ҫак ӗҫре пысӑк пулӑшу пама пултараҫҫӗ.

В. Барайӗв.

Район ҫаплах йулса пырат̆

ИШЛЕЙ. Районра нумай йалсоветсенчи йединоличниксен хуҫалӑхӗсем государствӑ умӗнчи обйазатӗлствӑсене тултарассипе кайа йулса пыраҫҫӗ. Районӗпе илсен, йединоличник хуҫалӑхӗсем государствӑна тырӑ таратас плана 96.4 процент, аш-какай парассине 69 процент, сӗт-ҫу парассине 60.9, ҫӗрулми парассине 50 процента йахан ҫеҫ тултарнӑ.

Государствӑ умӗнчи обйазатӗлствӑсене тултарасси йединоличниксем хушшинче кӑна мар, колхозсенче те ҫитӗлӗксӗр пырат̆. Районӗпе сӗт-ҫу пухас плана 87 процент тултарнӑ пулсан, фермӑсем йенӗпе плана 71 процент ҫеҫ тултарнӑ.

„Красная знамя", „Акара", „Красный танк" тата „XI-лет Чувашии" колхозсен фермисем ҫеҫ государствӑна сӗт-ҫу парса татнӑ. Мамка йалсоветне кӗрекен „III Интернационал", Ҫӗнйал Покровски йалсоветӗнчи „Сталь", „Янду" тата „Тимӗрҫырми" колхозсенчи фермӑсем хӑйсен обйазатӗлствисене ҫуррине те тултарман.

Г. Шчербаков.

ЙЕВ. ЙЕНИ

ПОЛИТРУК

(Очӗрк)

Политрук Бачурин ҫырӑва сӗтеле хучӗ те, кантӑк умне тӑчӗ.

—Ман умра Мускав, шавлӑ пысӑк хула,—шухӑшлат̆ вӑл,—Аслӑ Кремлӗн ҫӑлтӑрӗсем илемлӗн, лӑпкӑн йӑлтӑртатса ҫуваҫҫӗ. Вӑл ҫутта епӗ питӗ лайӑх куратӑп. Мишӑ Селикадзе ҫакӑн пек каҫра ман пата ҫыру ҫырчӗ пулӗ. Вӑл йурат̆ хӑйӗн тӑван йалне, Грузине. Вӑл Мускава та йуратат̆чӗ. Совет ҫыннишӗн кашни хулах, йалах—тӑван, хаклӑ. Тӑван ҫӗршыв—вӑл мӗлйунлӑ совет ҫыннисен тӑван амӑшӗ. Вӑл вӗсене ачашласа ӳстерчӗ, вӑл вӗсене вӗрентрӗ, ҫитӗнтерчӗ; ҫӗршыва сыхласси—кашни совет ҫыннишӗн пысӑк чыс.

Пирӗн Хӗрлӗ Ҫарта тӗлӗнмеле лайӑх ҫынсем. Мишӑ ҫеҫ мар, унӑн йулташӗсем те ҫӗршывӑн чӑн-чӑн ывӑлӗсем.

Политрук аса илет хӑйӗн бойецӗсене, хӑй пӑхса ӳстернӗ ҫынсене.

Вӑл кӗҫӗн командира Мишина аса илчӗ. Стена ҫинче унӑн сӑнӗ. Ку сӑн ӳкерчӗкне вӑл Академине кайас умӗн политрука парса хӑварнӑ. Мишин—Мускав рабочийӗ, ӗҫленӗ вӑхӑтрах каҫхи рабфак пӗтернӗ, Хӗрлӗ Ҫарта вӑл хӑйӗн пӗлӗвне хапартрӗ, ҫитӗнчӗ. Ҫулла, ротӑ вӗренӳре оборонӑра выртат̆чӗ. Мишин ручной пулеметчикпе пӗрле окопа кӗрсе выртрӗ. Ҫав вӑхӑтрах политрук пычӗ те, задачӑ ҫинчен ыйтса пӗлчӗ.

— Политрук йулташ,—терӗ Мишин хуллен окопра.

— Епӗ итлетӗп,—терӗ политрук, пулемет умӗнче командир ҫумнерех шуса пырса.

— Манӑн вӗренес килет. Часах епӗ службӑ пӗтеретӗп. Хӗрлӗ Ҫар—манӑн шкул, манӑн тӑван кил пулса тӑчӗ. Епӗ Хӗрлӗ Ҫартан уйӑрӑлма пултараймастӑп.

Мишин политрук ҫине ҫавӑрӑнса пӑхрӗ. Унӑн кавак, пысӑк куҫӗсем политрукӑн хура, ҫӗмӗрт пек куҫӗсемпе тӗл пулчӗҫ.

— Питӗ лайӑх, маттур, Мишин йулташ!

Политрук командир аллине хытӑ чӑмӑртарӗ.

— Сиртен лайӑх командир пулма пултарат̆,—терӗ политрук, каллех ӑшшӑн кулса.

— Епӗ инженер, ҫар чаплӑ инженерӗ пуласшӑн. Академине кайасшӑн.

Политрук ӑнланчӗ. Вӑл астуса илчӗ хӗллехи каҫсене, лагӗрти кунсене. Акӑ мӗншӗн Мишина политрук кӗнекесӗр нихҫан та курман. Каҫхине, хурала кайсан, вӑл ҫӗрӗ-ҫӗрӗпех кӗнеке вуланине аса илчӗ политрук. Анчах мӗншӗнха хӑй шухӑшӗ ҫинчен вӑл никама та каламан?

·Политрук кашни кун Мишина йатарласах вӑхӑт пама пуҫларӗ. Мишин нумай хатӗрленчӗ, вӗренчӗ. Академинче йывӑр, ответлӑ екзамене тытсан, политрук тӗлӗнмерӗ. Вӑл Мишин мӗн пек тӑрӑшса ӗҫленине пӗлет, вӑл сӑмаха сывлӑша йамаст̆. Мишин халӗ Академинче вӗренет, час-часах политрук патӗнче хӑнара та пулат̆.

Политрук ротӑри кӗҫӗн командирсен ҫуллахи пухӑвне астават̆. Политрук хӑй ҫинчен, йулташӗсем ҫинчен каласа панӑ. 1936 ҫулччен вӑл хӑй те кӗҫӗн командир пулнӑ. Халӗ политрук йатне илнӗ. Вӑл комсомолец, коммунист. Полкри вӑтам командирсем, ӗнерхи красноармейецсем, кӗҫӗн командирсем. Полк штабӗн начаљникӗн помош икӗ аслӑ лейтенант Дворкин красноармейец пулнӑ. Пилӗк ҫултан вӑл вӑтам командир пулчӗ. Йефименко, Самарин, Шевченко, Петров, Груздӗв—вӗсем пурте полкра, кунта ӳснӗ. Полкра вуншар ҫӗнӗ политработниксем ӳсрӗҫ. Голубчикӑв 1937 ҫулта ҫеҫ красноармейец пулнӑ. Халӗ вӑл политрук, дивизинчи политпай начаљникӗн помошникӗ. Парусӑв, Белов—кӗҫӗн политруксем.

Кӗҫӗн командирсем хӑйсем ҫинчен, Хӗрлӗ Ҫар вӗсемшӗн мӗнпек хаклӑ ҫинчен каласа пачӗҫ.

— Ӗмӗрлӗхе Хӗрлӗ Ҫара йулсан, мӗнле шутлатӑр?—ыйтрӗ йулашкинчен политрук.

Ротӑри пур командирсем те Хӗрлӗ Ҫара ӗмӗрлӗхе йулчӗҫ. Вӗсем округри пур кӗҫӗн командирсем патне те ҫыру ҫырчӗҫ.

— Ӑҫта халӗ вӗсем?—ыйтрӗ политрук хӑйӗнчен хӑй.—Тимофейӗв, Каљакин, Монахӑв ҫар училищинче вӗренеҫҫӗ. Лобанов, Зателепин, Чижов, Зенин кӗҫӗн лейтенантсен курсӗнче вӗренеҫҫӗ. Тарасӑв—старшина, лейтенант пулма ӗмӗтленет. Парусӑв—ротӑра политрук пулса ӗҫлет.

Кӑҫал отпуска кайнӑ пур бойецсем те кӗҫӗн командир пулса кайрӗҫ. Ковалев Мускавра ӗҫлет. Вӑл Осоавиахим райсовет председателӗ. Пулеметчиксем хатӗрлет.

Политрук ротӑри бойецсем ҫинчен шухӑшлат̆.

Вӑл Мишенков ҫинчен пӗрмай асӑнат̆.

Мишенков ротӑра ҫамрӑк бойецсенчен чи малтан ӗҫ дисциплинине пӑснӑччӗ. Ун ҫинчен ротӑра нумай калаҫат̆чӗҫ, хытӑ айӑплама ыйтат̆чӗҫ. Вӑл дисциплинӑна икӗ хутчен пасрӗ.

Политрук унпа уйрӑмӑн калаҫрӗ. Мишенковӑн шухӑшӗсене, вӑл мӗнле сывланине куллен-кун вӗренсе пычӗ.

Хулана унӑн йулташӗ килнӗччӗ. Вӑл хӑҫанмасӑр политрукран отпуск ыйтмарӗ.

Комсорг Монахӑв политрука каласа пачӗ. Политрук ӑна хулана йачӗ. Мишенков отпускран икӗ сехет малтан таврӑнчӗ. Пур бойецсем те тӗлӗнсе кайрӗҫ.

Политрук кашни ҫынӑн чӗрине кӗрет, ӑна пӗлет. Ҫавӑн пекех Мишенков-та. Мишенков комсомола кӗчӗ, халӗ вӑл ротӑра комсомол организацин президиум членӗ.

Замазашчук йулташа пирӗн ротӑра пурте пӗлеччӗҫ. Вӑл вырӑсла пӗлместӗп, тесе лайӑх вӗренеймесчӗ. Политрук унпа нумай калаҫнӑ, комсомолец Лудина унпа пӗрле хулари кинотеатрсене йанӑ. Замазашчук вырӑсла калаҫма пуҫларӗ. Политзањатинче пӗрремӗш хутчен лайӑх отметкӑ илсен, хӑй ҫеҫ мар пӗтӗм ротӑ хӗпӗртерӗ, савӑнчӗ.

Политрук хӑй пӗччен ӗҫлемест. Унӑн вуншар активист, помошниксем пур. Комсомолецсем—унӑн ҫывӑх йулташӗсем.

Комсомол организацинче ротӑри бойецсенчен сакӑрвунӑ проценчӗ тӑраҫҫӗ. Пысӑк вӑй.

Лудин, Зателепин, Лобанов комсомолецсем парти кандидатне кӗчӗҫ, тата сакӑр ҫамрӑк кӗме хатӗрленеҫҫӗ. Политрук комсомолецсене рекомендацисем тупма пулӑшат̆, коммуниссемпе паллаштарат̆...

Политрук умӗнче Ленин—Сталин томӗсем. Вӑл пайан парти историйӗн учебникӗ тӑрӑх виҫҫӗмӗш темӑпа вӗренет. Пайанах вырӑс чӗлхипе „Пушкинпа тӑван ҫӗршыв" темӑпа контрољнай ӗҫ ҫырса памала. Политрук кӑҫал полкри вӑтам шкула пӗтерет.

Политрук Бачурин ҫурҫӗрте ҫывӑрма выртат̆.

— Ыран ротӑра Михайлӑв йулташ патне ҫырса йамала-ха. Вӑл Мускава райсойуз ӗҫӗпе килмеле. Ман пата кӗрсе тухтӑр, хӑна пултӑр.

Ҫынсем ӳсеҫҫӗ, улшӑнаҫҫӗ. Михайлӑв—Хӗрлӗ Ҫарта ҫеҫ комсомола кӗчӗ. Халӗ вӑл Вӑрмарта, хатӗрлев кантурӗн директорӗ.

Ҫӗршыв ӳсет, ҫынсем ӳсеҫҫӗ, улшӑнаҫҫӗ.

Пирӗн ҫӗршывра тӗлӗнмеле халӑх пурӑнат̆ ҫав. Тӑшман пирӗн чечекленнӗ ҫӗршыв ҫине тапӑнсан, Хасан кӳлли патӗнчинчен те вӑйлӑрах оглор туйанӗ.

Кремл башни ҫинчи сехет вуникӗ ҫапат̆. Оркестр „Интернационал" йурлат̆.

Политрук пролетари гимне итлесе ҫывӑрса кайат̆.

Мускав, 1938.

Китайри вăрçă

Центрти фронтра çапăçусем пуринчен ытла Уханьрен кăнтăр йеннерех, Иочжоу районĕнче тата Кантон-Ханькоу чукунçулĕнчен хĕвелтухăç йенче сарăлса пыраççĕ.

Китай çарĕсем хăйсен сылтăм флангĕнче çурçĕр йеннеле малала куçса пыраççĕ. Темиçе пункта туртса илнĕ хыççăн, Китай çарĕсем Тунчен çине наступлени туса пыраççĕ. Китай çарĕсен малти отрйачĕсем Тунченрен 5 километртра çапăçаççĕ.

Синьцзйан йуханшывĕн çурçĕр йенчи çыранĕ çинче Китай çарĕсем, чылай пунктсене йапонецсенчен тасатнă хыççăн, хăйсем йышăннă позицисене çирĕплетеççĕ.

Кăнтăр фронтĕнче декабĕрĕн 9-мĕшĕнче Китай çарĕсем Вейчжоуна (Кантонран хĕвеланăç йенче 105 километртра) йышăннă. Йапонецсене йăвăр çухатусем кўнĕ, вĕсем Боло йеннеле (Вейчжоуран хĕвеланăç йенче) кайала чакса пыраççĕ. Декабĕрĕн 11-мĕшĕнче Китай çарĕсем йапонецсене Болоран хĕссе кăларнă.

Халĕхи вăхăтра çапăçусем Цзенчен патĕнче (Кантонран хĕвелтухăç йенче) пыраççĕ.

Çурçĕр Китайра Хенань провинцинче хайарран çапăçнă хыççăн, декабĕрĕн 10-мĕшĕнче Китай çарĕсем Хуанхе йуханшывĕн çурçĕр йенчи çыранĕ çинчи, Чженчжоуран çурçĕр-хĕвеланăç йеннели Учжи хулине йапонецсенчен тасатнă. Декабĕрĕн 11-мĕшĕнче Китай çарĕсем йапонецсене Дахуанцзйаоран (Учжирен хĕвеланăç йенче) хĕссе кăларнă. (ТАСС).

Америкăри Пĕрлешулĕ Штатсенче фашисла агрессăрсене хирĕç йухăм сарăлать

Сенатăр демократ Кинг Германине, Италине, Йапонине хирĕç пулса сăмах тухса каланă. Кинг: Америкăри Пĕрлешўлĕ Штатсен Германипе дипломатилĕ çыхăну тытма тата суту-илў тума пăрахмала, тенĕ. Америкăри государственнăй секретар помошникĕ Сейр та, Ньу-Йоркри муниципалитет председателĕ Моррис та çавăн пекех Германи фашисăмне хирĕç пулса сăмахсем каланă.

Вашингтонра „пан-американски демократи" текен конференци пулса иртнĕ, унта профсойуз, çамрăксен тата ытти тĕрлĕ организацисен представителĕсем 200 çынна йахăн, çавăн пекех тата паллă писателсем, учонăйсем тата ыттисем пулнă. Конференци çĕр чăмăрĕн хĕвеланăç полушаринче демократине тытса тăрассишĕн тата ăна аслăлатассишĕн кĕрешме, çавăн пекех тата латин Америкине фашисăм пырса кĕрессине хирĕç кĕрешме йалан ĕçлесе тăракан организаци тума йышăннă.

Конференци Рузвельта республикăлă Испанине хĕçпăшалсем йăма чарнине пăрахăçа кăларма чĕнсе резолюци йышăннă. Çавăн пекех резолюци Кăнтăр Америкăри тĕрмесенче ларакан пур антифашиссемпе политикă ĕçĕпе тĕрмене лекнĕ çынсене ирĕке кăларма ыйтать. (ТАСС).

М. В. Водопйанăвпа Г. Ф. Байдуков йулташсем—совет писателĕсен Сойузĕн членĕсем

Совет Сойузĕн Геройĕсем М. В. Водопйанăв тата Г. Ф. Байдуков йулташсем пирĕн çĕршывăн мухтавлă летчиксем пулнипе кăна мар, вĕсем тата литературăра паха ĕçсем тунипе паллă пулса тăчĕç.

Совет писателĕсен Сойузĕн Президиумĕ Водопйанăвпа Байдуков йулташсене совет писателĕсен Сойузĕн членне илме йышăннă.

Кĕскен

** „Родина" самолетăн вĕçевĕ çинчен доклад. Сĕнтĕрвăрринчи çĕрйĕркелўпе мелиораци техникумĕнче преподавател Влаçук „Родина" самолетăн вĕçевĕпе унăн паттăрла екипажĕ çинчен доклад туса панă.

** Шахмăт турнирĕ. Çĕмĕрле районĕнчи Пойандайкинăри тулли мар вăтам шкулта çак кунсенче шахмăт турнирĕ пулса иртнĕ. Турнирта 6 учител выляна. Малти вырăна Кулĕв йулташ тухнă.

** Оборонă значокĕсем илеççĕ. Квалти вăтам шкул çумĕнчи (Вăрмар р.) Осоавиахим членĕсенчен 37 ача ПВХО значок нормине, 10 ача Ворошилăвла тĕл перекен значок нормине панă.

** Депо тăваççĕ. Мăн-Шемертеври (Йетĕрне р.) „Заветы Ленина" колхозра пушарпа кĕрешекенсен команди валли депо тума тытăннă. Ăна çава тухиччен туса пĕтереççĕ.

** Ача çуратмали çурт. Мăн Йамашри „Шуçăм" колхозра (Хĕрлĕ Чутай р.) ача çуратмали çурт уçнă.

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Хасан кўлли районĕнчи çапăçусенче пулнă капитан Иван Ваçилйĕвич Иакубович. Ăна Ленин орденĕпе наградăланă.

П. Русанăв фото-ўкерчĕкĕ (Сойузфото).

5 кун хушшинче барак тунă

Ĕç çапла пуçланчĕ: нойабĕр уйăхĕнче Шупашкарти çĕнĕ строительствăра рабочисемпе инженерлă-техникллă работниксем хушшинче Сталинла Конституци икĕ çул тултарнă куна ўсĕмсемпе кĕтсе илессишĕн хĕрўлĕ ăмăрту пуçланчĕ. Кашни рабочи, инженер, техник вăл кирек хăш участкăра ĕçлесен те, Сталинла Конституци кунне производствăра лайăх ĕçленипе, ўсĕм тунипе кĕтсе илессишĕн кĕрешме тытăнчĕç.

Комсомолец Шчукин йулташ йертсе пыракан прораб участкинчи рабочисем хăйсен пухăвĕнче çĕнĕ барака хăвăрт туса пĕтерме пулчĕç. Çакна пурнăçа кĕртес тесе бригадăсем пĕр-перинпе ăмăртса ĕçлеме пуçларĕç. Бригадăсенче пĕтĕмпе 48 çын пулнă. Ĕçлеме малтанах тĕплĕн хатĕрленни тата бригадăсем хушшинчи ĕçе лайăх организацилени ĕç тухăçлăхне пысăккăн ўстерме май пачĕ. Бригадăсем вăтамран илсен плана 271,4 процент тултарса пынă. Уйрăмăн илсен Ларин йулташ бригади 375,6 процент, Савченко йулташ бригади 363,5 процент, Йашмакăв йулташ бригади 282 процент тултарнă т. ыт.

Ларин тата Савченко йулташсем йертсе пыракан бригадăсем хăшпĕр кунхине нормăна 511 процент тултарса ĕçлерĕç. Кашни плотник кунсерен 25—30 шар тенкĕ ĕçлесе илчĕç.

Çапла 48 рабочи ĕçленипе 5 кун хушшинче барак та пулса ларчĕ. Барак пĕчĕккĕ мар.

Барак тунă çĕрте ĕçленĕ рабочисем хăйсен пухăвĕнче çитĕнўсене çирĕплетсе малашне татах та тухăçлăрах ĕçлессишĕн кĕрешме сăмах пачĕç. В. Д.

Санаторисемпе кану çурчĕсенче 252 çын пулнă

Каçал Канашри вакунсем йусакан савăтра ĕçлекен рабочисем, инженерлă-техникллă работниксем, мĕнпурĕ 252 çын, санаторисемпе кану çурчĕсенче пулнă.

Пçихикă пăсăлнипе чирленĕ çынсене ăçта сыватмала?

Чăваш республикĕнче пçихикă пăсăлнипе чирлекенсем çук мар. Чăн, вĕсем ытти чирпе чирлекенсем хушшинче чи сахал, анчах кирек ăçта (хулара, районра) чирлесен те, вĕсене тўрех Шупашкара ăсатаççĕ. Пыраççĕ вăра Шупашкар пульницине. Чирли хăй çуйхăшать, илсе пынă çынни тарăхса кайнипе татах хытăрах кăшкăрать. Кирек ăçтан тупса пар вырăн! Тупмасан пăрахса хăварма хатĕр. Анчах ăçта-ха вăл? Тухтăр хыпăнса ўкет, чупать инфекци уйрăмĕнчи тахçан, тем валли тунă тĕттĕм пўлĕме. Пушă мар вăл та. Пушă пулсан та хума хăруш, йунашар сикекен чирсем. Пçихикă пăсăлнă çынна сикекен чир лектерсен те йурать-и мĕн? Тепĕр чух тата ун пек чирлисем тăрукках ик-виç çын пулаççĕ, пурĕш те вĕсем ирĕккĕн выртарма хăрушăскерсем. Пĕр-перинпе çапăçма вĕсене (есĕр ухмах тесе) пĕр пўлĕме хупсан та йурать-и мĕн? Çакăн пек пулнипе пĕр тухтăр кăна аптраса курман ĕнтĕ, нимрен малтан усал йачĕ вĕсем çине лекет. Илсе пыракансемшĕн кирек мĕнле вырăн туп, ирĕке йама çук пçихикă пăсăлнă çынна.

Пирĕн государствă, пирĕн аслă çулпуç Сталин йулташ кашни ĕççыннишĕн, кашни çын сывлăхĕшĕн тăрăшаççĕ. Çакăн пек вăхăтра çаквашкал положенине урăх чăтма çук ĕнтĕ. Анчах ЧАССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ тем майпа чăтать-ха. Ун пек чух вăл, кирек хăçанхи пекех, мĕнле те пулсан май тупма хушать. Вăл хушнипе май тупкаласа миçе çул пурнатпăр ĕнтĕ. Усси çук, сийен кăна. Пçихоприйомник çукки тепĕр тесен Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариатне кăна мар, çўлерех тăракан организацисене те лайăх паллă. Пĕрре анчах мар пырса кайнă ĕнтĕ пульницана тĕрлĕрен тĕрлĕ комиççисем, паллăран паллă представителсем. Лавĕ халĕ те çавăнтах.

Тĕрĕс, пçихикă пăсăлнипе чирленĕ çынсене Хусанта йышăнаççĕ.

Анчах пурне те мар. Çитменни çине унта йариччен анкетă тавраш тултарса, сăваса, диагноз лартса кунта тытас пулать малтан. Чылай вăхăт иртет. Унччен ăçта та пулсан кунтах усрас, сыватас пулать.

Халлĕччен пирĕн республикре пĕр пçихиатăр (пçихикă пăсăлнипе чирленĕ çынсене сыватакан тухтăр-специалис) çук. Мĕншĕн? Килме килĕшекенсем пулман мар, анчах мĕнле çын килсе ларĕ инфекципе йунашарлă тĕттĕм, мĕскĕн пўлĕме?

Çитĕ. Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариатĕнчен ыйтма вăхăт: пçихикă пăсăлнипе чирленĕ çынсене сыватма тивĕçлĕ çынсем вырăнне шутлатăр-и есĕр? Шутлатăр пулсан, хăçан пулать пçихоприйомник? Хăçан пулать пçихиатăр?

Врач К. Пайраш.

Тарас Шевченко сăввисем

Пурпĕрех мар...

Пĕрех мана: Украйнăра-и
Пўлĕх пўрĕ пурăнма,
Йе асăнĕç тăсте, йутра-и
Йе пултарĕçĕ манма,—
Пурпĕрех, пĕрех мана!

Ĕп ўсрĕм, çитĕнтĕм йутра,
Маншăн никам куççуль тăкман.
Йутрах йĕретĕп еп, вилетĕп,
Йалтах хампа илсе кĕретĕп:
Хăвармасп пĕр йĕр палли
Хамăр Украйнă валли—
Хамăрăн мар çĕр валли!

Унта та асăнмĕç мана,
Ашшĕ калас çук ывăлне:
„Кĕл ту, ачам, ўксе пуççап,
Çак çын Украйнăшăн, ак çак
Хăй ĕмрине йутра иртерчĕ,
Пит пысăк пулнă унăн терчĕ".

Кĕлтăвать-и вăл, тумасть-и,—
Маншăн пулсассăн пурпĕрех.
Анчах, тўрех калап—тунмастăп:
Украйнăна манне—тăван çĕре
Çынçийенсем шутлаççĕ çывратма,
Çывратсассăн—çаратмашкăн,
Ун чухне тин вăратма—
Пурпĕрех мар вара ку маншăн!

Петербург, тĕрме. 1847 ç.

Митта Петĕрĕ куçарнă.

Пĕчĕк Марйанăна

Хĕнхур, инкек çук вăхăтра
Аван ача чунне,
Сан пўлĕме тискерленсе
Тăшман килмен чухне
Ўссем, ўссем, ман чĕппĕмçĕм,
Илемлĕн чечеклен,
Тăшман саппа килеиĕ те,
Пăрахĕ—ес типсен.
Нимле те çăланаймăн ес
Хайар тăшмансенчен:
Сана кайать сан çамрăклăх,
Ним йулмĕ илемрен,
Куççульпеле çеç çăвăнĕç
Сан çепĕç куçусем,
Хавшавĕ сан йăваш чĕрў,
Тек хурлăх çеç тўссе.
Тăшман сана çаратĕ те,
Хăварĕ хурлăха,
Кайран ес ĕмĕр-ĕмĕрех
Ылханăн турăна...
Ан чечеклен, апла пулсан,
Халех çĕрпе хуплан,
Вара часах ес çăлăнăн
Çав йăвăр хурлăхран.

Усли Ваçлейĕ куçарнă.

Ворошилăвла стрелоксем

НУРĂС. Педучилищăри студентсем оборонă ĕçне йуратса вĕренеççĕ. Вĕренў çулĕ пуçланнăранпа кунта 50 студент „Ворошиловский стрелок" значокĕн нормисене пачĕç.

И. Прокопйĕв.

УЛАТĂР. Педучилищăри Осоавиахим организаци хăйĕн ĕçне лайăх туса пырать. Студентсем винтовкăран тĕл пеме, противогазпа уçă курма т. ыт. оборонă ĕçĕсене те вĕренеççĕ. Çак çул хушшинче училищăра 45 студент ПВХО значокĕн нормисене пачĕç. Вĕсем çак кунсенче значоксем илмеле.

И. Кульукин.

БИБЛИОГРАФИ

ЕЛКЕРĔН ÇĔНĔ КАЛАВĔ

Кăçалхи „Сунталăн" 3—4 номĕрĕсенче Елкерĕн „Унтри" йатлă калавĕ пичетленсе тухрĕ. Вăл калава „Чăваш литературин хрестоматине" те кĕртнĕ.

Унтри пурнăçри тĕрлĕ йăварлăхсене тўссе, çĕнĕ пурнăçа кĕрешў урлă хăйулăн утса кĕрекен çын. Унăн паттăрлăхĕ тĕрлĕрен кукăр-макăр çулсем урлă аталанса пырать. Ĕлĕкхи саманара ыйткалакан пек выçăлă-тутăлă пурăнса, çын шутĕнче пулма пултарайман Унтри пайан чаплă стахановец. „Ĕлĕкхи чаплă çынсем—кулак-експлоататăр, усламăç-йунсăхан, купец-спекулянт, пуп-уредник сухалчĕç. Халĕ ĕнтĕ чаплă çынсем — колхозсемпе совхозсенчи, шкулсемпе клубсенчи деятелсем, паллă трактăриссемпе комбайнерсем, уйхир ĕçĕпе вылях-чĕрлĕх бригадирĕсем, колхоз хирĕсенчи лайăх ударниксемпе ударницăсем пулса тăраççĕ" (Сталин).

Çакăн пек çĕнĕ çынсем ўснине, вĕсен пурнăç çулне автăр Унтри урлă кăтартса парать. Унтри кун-çулĕнче вулакансем нумайĕшĕ хăйсен пурнăçне те курма пултараççĕ. „Унтри"—биографилĕ калав. Калавăн геройĕ — чухăн çын ачи. Вăл ачалах, йалти выçăлă-тутăлă пурнăçа чăтаймасăр, Çĕрпў хулине ĕç шырама тухса кайать. Çăкăр-кулачпа суту-илў тăвакан пуйан çын патĕнче ĕçлет. Кунта çамрăк ача çав тери нумай ĕçлесен те, хăйне валли çителĕклĕ укçа илеймест, йĕркелĕ тăранса пурăнаймасть. Кунсăр пуçне, Унтрийе хуçаран час-часах патак та тивкелет. Çак йăвăр ĕçе тўсеймесĕр вăтă рабочи Шапшинскийпе пĕрле çамрăк Унтри Хусана ĕç шырама кайать. Анчах ĕçлекенсем кунта та начар пурăнаççĕ. Унтрирен кулаççĕ, мăшкăлаççĕ. Йала таврăнсан та çавах. Йалта кулаксем чухăнсене пусмăрласа пурăнаççĕ. Çапла вара „телей шыраса" Российăри чылай хуласенче çўренĕ хыççăн Унтри „Российăра нимĕнле рабочишĕн те, ниçта та илемлĕ пурнăç çуккине чухласа илет".

Ўссе çитсен Унтрийе тĕнче вăрçине илсе кайаççĕ. Унтри ку вăрçăран аманса таврăнать. Çак асаплă пурнăçран Унтрийе Октябĕрти Социалисăмлă революци хăтарать. Вăл революцишĕн мĕнпур вăйне хурса ĕçлет.

Унтри хăйĕн ĕçне пăрахмасть. Совет влаçĕ çирĕпленсе çитсен, вăл çăкăр пĕçерес тĕлĕшпе пекарнинче ĕçлет. Ĕлĕкхи пек талăкне 16—18 сехет мар, 8 сехет ĕçлет те ытти вăхăта культурăлă канса ирттерет. Пекăрсен облаçри конференцийĕнче Унтрийе ударниксен хисеплĕ грамăтине параççĕ. Çакăнта ĕнтĕ вăл делегатсем умне тухса хумханулă сăмах калама пуçлать: „Епĕ пайан, иртнĕ пурнăçăма аса илетĕп те, икĕ тĕрлĕ самана—икĕ тĕрлĕ пурнăç куратăп. Епĕр—ĕлĕк чура пулнă, халĕ — хамăр хуçа... Тав сире, манăн ĕçĕмсене шута илсе пахаланăшăн. Малашне тата тăрăшарах ĕçлĕп"...

Çакăн пек Унтрийĕн пурнăç çулĕ. Писател икĕ тĕнчен уйрăмлăхĕсене çынсем урлă кăтартма тăрăшни калавăн паха йенĕсенчен пĕри пулса тăрать. Кунсăр пуçне, пусмăр тĕнчин хуçисем те калавра çителĕклĕ вăйлă сăнланнă. Пекăрсене кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлеттерекен Çĕрпў пуйанĕ Матижĕв, рабочисене мăшкăласа йăвăр ĕçре ĕçлеттерсе укçа сахал тўлекен Хусан хуçи Воробйов тата ытти пуйансем те ĕççыннисен ĕнси çинче пурăннă. Çавăнпа та вĕсем Октябĕрти революцийе хирĕç йут çĕршывсен капиталисĕсемпе пĕр пулса çапăçаççĕ. Çак Матижĕвсен пусмăр тĕнчин пусмăрлăхне, тискерлĕхне Елкер ĕнентерўлĕ те витĕмлĕ образсемпе кăтартса панă. Ку калавăн пĕр пайĕ. Анчах çак калавăн иккĕмĕш пайĕ самайах вăйсăрланни пире тĕлĕнтерет. Мĕншĕн тесен, Октябĕрченхи тапхăрти ĕçсем ўснĕçемĕн ўссе, тарăнланса пыраççĕ, вулаканăн кăмăлне тĕпрен хускатаççĕ. Ку ĕнтĕ геройăн пурнăçне, переживанийĕсене, çав вăхăтрах вăл ўснине те тăврари пурнăçпа, событисемпе çыхăнтарса илемлĕ чĕлхепе кăтартнинчен килет.

Унтри Октябĕр революцине хапăл туса кĕтсе илет-и, кулаксемпе кĕрешет-и, стахановец пулса грамăтă илет-и—çапах та иккĕмĕш пайĕнче çĕнĕ пурнăç çынни обрăзланса тухайман. Тĕрĕссипе каласан, уйрăм примерсемпе çырнă статйа пек. Унтрийĕн чĕлхи те вулакан чунне художествă витĕмлĕхĕпе пырса тивеймест. Унăн чĕлхи хаçатри статйасенчи пек, лозунгсенчи пек.

„Унтри" калавра сўжет линийĕ пăсăлмасть пулсан та, йулашкинчен вăйсăрланать. Çак çитменлĕхе епĕр Елкерĕн „Вăрçă кунĕсем" повеçĕнче те куратпăр. Çапла ĕнтĕ, писателсен произведенийĕн вĕçĕсем, йулашки пайĕсем çине те нумайрах пăхмала, геройсене кăтартма чĕлхен пуйанлăхне шеллемеле мар.

Епĕр çапла калани „Унтри" калав начар тенине пĕлтермест. Калавăн содержанийĕ те, пирвайхи пайĕсенчи чĕлхи те питĕ аван.

НИК. ДЕДУШКИН.

Сталинградри аероклубра ĕçлекен чи лайăх летчик-инструктăрсенчен пĕри комсомолец Михаил Дмитренко ПСÇЛКС XX çул тултарнă тĕле çамрăк летчиксен группине вĕрентсе кăларнă.

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Михаил Дмитренко.

Пйесăсен конкурсĕн итогĕ

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи искусствă ĕçĕсен комитечĕ иртнĕ çулта пуçарса йанă пйесăсен конкурсĕ пĕтрĕ. Декабĕрĕн 13-мĕшĕнче конкурс комиççийĕ й у л а ш к и ларуне туса иртерчĕ. Конкурса мĕнпурĕ 32 пйесă килнĕ. Комиççи вĕсенчен тăватăшĕн автăрĕсене преми памала турĕ, 6 пйесăна (автăрĕсене преми памасăр) пичетлеме йурăхлă, тесе йышăнчĕ.

Преми илме тивĕçлĕ пулнисем:

П. Н. Осипов. —„Кăкламан тымарсем" пйесăшăн—пĕрремĕш преми, 2.500 тенкĕ.

Н. Айзмăн.—„Утне çитмен туртине" комедишĕн—иккĕмĕш преми, 1.500 тенкĕ.

Тихăн Петĕрки—йатсăр пйесăшăн—иккĕмĕш преми, 1.500 тенкĕ.

Вукăлăв.—„Хăрушă каç" пйесăшăн — виççĕмĕш преми, 1.000 тенкĕ.

Ваçилйĕв, Федăрăв тата Çеменăв йулташсене хавхалантарас шутпа конкурс комиççийĕ 200 тенкĕшер преми памала турĕ.

111.265 çын кино курнă

Канашри кинотеатрта 1938 çулта, 11 уйăх хушшинче, пурĕ 111.265 çын кино курнă. Вăл шутран: „Ленин в Октябре" фильма 4665 çын, „Человек с ружьем"—3993, „Пугачов"—5590, „Волга-Волга"—1840, „Богатая невеста" — 2196, „Балтийцы"—2986, „Граница на замке"—2090, „Великий гражданин" фильма —1455 çын курнă.

Нойабĕрĕн 23-мĕшĕнче районра калаçакан кинопередвижкă ĕçлеме тытăннă.

А. Йазыков.

Лавкара йĕркелĕ те таса

Кўкеç йалсовĕн Вăрманкасри 12-мĕш номĕрлĕ лавкинче (Шупашкар районĕ) продавец пулса Федот Тихăнăв йулташ ĕçлет. Вăл тăрăшнипе лавкана пур йенчен те культурлă та йĕркелĕ туса çитернĕ. Лавка çуртне кĕркунне мăкларĕç, кăмака тутарчĕç, тавар хумали çўлĕксене çĕнĕрен турĕç. Халĕ унта таварсене йĕркелĕ вырнаçтарнă. Кашни тавар çинех вăл мĕн хак тăнине çырса çапнă. Малтан лавкара йĕркесĕрлĕхсем нумай пулнă, тавар илме пыракансем лавкарах ерех ĕçнĕ, табак туртнă, халĕ вĕсене йалтах чарнă.

Колхозниксене кирлĕ йапаласене вăхăтра кўрсе килеççĕ. Лавка кашни кварталрах таварçавăрнăш плане ытлашшипех тултарса пырать.

В. Иевгенйĕв.

Парти вĕрентĕвĕн тĕп çуртĕнче

Ыран, декабĕрĕн 16-мĕшĕнче, ПСК(б)П Обкомĕн парти вĕрентĕвĕн тĕп çурчĕ партипе совет активĕ валли „Экономическое положение стран фашистской агрессии (Германия, Италия и Япония)" темăпа лекци иртерет.

Лекци каçхине 7 сехетре пуçланать.

Пурте ирĕклĕнех кĕме пултараççĕ.

Парти вĕрентĕвĕн тĕп çурчĕ.

СУД

Кулакла саботаж тăвакансем суд умĕнче*)

Суд пригăварĕ

Чăваш АССР Верховнăй Сучĕн вырăна тухса çўрекен çеççийĕ Йараслав йалсоветĕнче (Шăмăршă районĕ) кулакла саботаж организациленĕ Хайловсемпе Морозăвсен ĕçне пăхса тухса пĕтерчĕ. Суд çакăн пек пригăвăр йышăннă.

Кулакла саботаж тăвакансене Алексей Илйич Хайлăва, Виктăр Иванăвич Морозăва тата Христофор Николайĕвич Савелйĕва кашнине вуншар çуллăха тĕрмене хупса лартмала тата 5-шер çул хушши сасă прависĕр хăвармала.

Вăрă-хурахла Павелпа Федăр Хайлăвсене вунă çуллăха тĕрмене хупса лартмала тата 4-шар çул хушши сасă прависĕр хăвармала тунă.

Тимофей Иванăвич Морозăва суд 8 çуллăха тĕрмене хупса лартмала, Порфирий Виктăрăвич Морозăва 7 çуллăха тĕрмене хупса лартмала тата кашнине 5-шер çул хушши сасă прависĕр хăвармала, Петр Федотăвич Федотăва 6 уйăх хушши ирĕксĕр ĕçлеттермеле тунă.

Суд Тимофей Хайлăвăн икĕ лашине, Алексей Хайлăвпа Федăр Хайлăвăн икĕ лашине конфискацилесе государствăна пама йышăннă.

Чăваш АССР Верховнăй Сучĕн вырăна тухса çўрекен çеççийĕ йышăннă пригăвăра Шăмăршă районĕнчи ĕççыннисем пысăк кăмăлпа ырланă.

*) Суд çинчен „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн декабĕрĕн 11-мĕшĕнче тухнă номĕрĕнче çырнă.

Çамрăк хĕре ирĕксĕрленĕшĕн

Мăн Йамашри (Хĕрлĕ Чутай р.) „Шуçăм" колхоз председателĕ Йакăв Волкăв çуллахи вăхăтра 16 çулхи О. хĕрачана велосипед çине лартса хире илсе тухнă. Хирте вăл хĕрачапа çурçĕр иртиччен çўренĕ, кайран хĕрачана ирĕксĕрленĕ пулнă.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи 2-мĕш участкăри халăх сучĕ Волкăв ĕçне пăхса тухса, ăна 5 çул тĕрмене хупса, тĕрмерен тухсан 2 çул хушши суйлав прависĕр хăвармала турĕ. Суд курма пынă халăх пригăвара ырларĕ.

Й. Самарин.

„Максим Горькин пурнăçĕ тата ĕçĕ" йатлă выставкă

Парти вĕрентĕвĕн тĕп çуртĕнче Максим Горькин пурнăçĕпе ĕçне çутатса паракан выставкă уçăлнă. Выставкă кашни кунах кăнтăрла иртни 3 сехетрен пуçласа каçхине 10 сехетчен уçă пулать.

Коллективлăн пырса куракансемшĕн выставкă кăнтăрла иртни 5 сехетрен пуçласа каçхине 10 сехетчен, канмали кунсенче 11 сехетрен пуçласа каçхине 5 сехетчен ĕçлет.

Парти вĕрентĕвĕн тĕп çурчĕ учрежденисемпе организацисен руководителĕсенчен коллективлăн хăш кун тата хăш сехетре пырса курасси çинчен зайавкăсене малтанах пама ыйтать.

Парти вĕрентĕвĕн тĕп çурчĕ.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

ПУР ГРАЖДĂНСЕНЕ ТЕ

пĕлсе тăма

Аш-какай продукцисен пахалăхне лайăхлатас тесе, аш-какайа контроль тăвакан станцине клеймо пустарма пыракан пур граждăнсене те выльăх тирне хатĕрлев организацисене панни çинчен квитанци кăтартма хушаççĕ. Квитанци çук пулсан клеймо пусмаççĕ.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Ветеринари управленийĕ.

2—1

ЧĂВАШСЕН ПЕДАГОГИКĂ ИНСТИТУЧĔПЕ УЧИТЕЛСЕН ИНСТИТУТĔНЧЕ ЗАОЧНĂ ВĔРЕНЕКЕНСЕНЕ

ПĔЛСЕ ТĂМА

Пĕтĕм Сойузри халăх переписне иртерме çĕре хутшăнса ĕçлемен учител-заочниксен хĕллехи зачотлă çеççийĕ 1938 çулти декабĕрĕн 31-мĕшĕнчен пуçласа 1939 çулти йанварĕн 12-мĕшне çитиччен пулса иртет. 1938 ç. декабĕрĕн 31-мĕшĕнче занятие кăнтăрла 3 сехетре пуçланать.

Çеççине килекенсен хăйсемпе пĕрле паспăрт, тăранса пурăнмалăх укçа-тенкĕ, выртса тăмали хатĕрсем, туса хатĕрленĕ контрольнăй ĕçсем, учебниксем, вĕренў пособисем тата зачот кĕнекисем илсе килмеле.

Пединститут директăрĕ НЕЙМАН.

2—1

Уполномоченный Чуваштлавлита № 585. Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 881. ф. б. 58×84 п. л.